Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 24 КĔÇНЕРНИКУН 68 (4881) -мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат̆ ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Потребкооперацин пайанхи ĕçĕ

Совет суту-илӳ работникĕсен чылăрах та чылă ĕçĕ—социалисăмла çĕнĕ пурнăç тăвакан совет гражданĕсем ваљљи пур чухне те кирлĕ таварсене пĕр вĕçĕмсĕр тăратасси. Суту-илӳ ĕçĕ туллин пулса ытăр, магазинсем, ларйоксем йаланах таварсемпе пуйан пулччăр. Çакна ыйтат̆, çакна кĕтет кашни совет гражданинĕ—тавар илекен çын. Вăл ăна ыйтма, ăна кĕтме тивĕçлĕ ĕнтĕ. Унăн пурнăçĕ куллен-кун лайăхланса, пуйанланса пырат̆, унăн куљтурлăхĕ хăвăрт аталанат̆. Çавăнпа вăл суту-илӳ организацисенчен ытларах та ытларах тавар ыйтат̆.

1937 çулта пĕр Чăвашпотребкоопераци йенĕпех 12 пине йахăн сехет, пилĕкçĕр ытла велосипед, 674 патефон, пин çурă радиоприйомник сутнă. Çак цифрсем вĕсем хăйсем çинчен хăйсемех аван кăтартса параççĕ.

Анчах тӳрех калас пулат̆: суту-илӳ организацисем тавар илекен çынсем мĕн ыйтнине пĕтĕмпех кăмăлласа пырассинчен питех те аякра тăраççĕ-ха. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Чăвашсойуз чылай кайа йулса пыни çине кăтартмала. Вăл иртнĕ çулхи таварçаврăнăш планне ăнăçлăн пурнăçлаймарĕ—мĕн пурĕ те 90 проц. кăна тултарчĕ. Çакна шута илсе, Чăвашсойуза пăхăнса тăракан суту-илӳ тăвакан организацисен — райсойузсен, йалпосен 1938 çулта та çавăн пек намăса курас марччĕ тесе, çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчепех çĕнĕле ĕçлеме пуçăнмаллаччĕ, йалсенче суту-илӳ ĕçне тивĕçлипех бољшевикла йĕркелеме тытăнмаллаччĕ. Çапла çине тăрсах, мĕн пур хастарлăхпа, пĕтĕм пултарулăхпа ĕçлени кăçал та сисĕнмест̆. Чăвашсойуз 1938 çулăн пĕрремĕш кварталти тавар çаврăнăш планне пайанхи куна мĕн пурĕ те 61 процент кăна тултарнă. Ку хисеп никама та, нимĕн чухлĕ те савăнтарма пултараймаст̆.

Йалти суту-илӳ ĕçĕн пайанхи вирлĕ задачи вăл—çуракине тĕплĕн хатĕрленесси, колхозсемпе МТСтанцисене, колхозниксемпе йединоличниксене çураки вăхăтĕнче кирлĕ таварсем çителĕклĕн кӳрсе килесси пулат̆. Социалисăмла йалхуçалăхĕн чаплă çынĕсем—уйхир стахановецисем, ударниксем, колхозниксем Сталин йулташ лозунгне тарах çулленех 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илессишĕн ăмăртса кĕрешес ĕçре потребкооперацисен хăйне тивĕçлĕ, хисеплĕ вырăна йышăнмала. Йалпосен МТСтанцисенче, колхозсенче пĕрлешӳлĕ апатланассине йĕркелеме пулăшас пулат̆, колхозниксене пур кирлĕ таварсене: сӳсмен-ĕнерчĕк таврашсем, михĕсем, вĕренсем, маçтикĕт таврашсем кӳрсе парас пулат̆. Çакă вăл—ыран мар, пайан тумали ĕç. Ку тĕлĕшпе Чăвашсойуз мĕн тăват̆-ха? Нимĕнте тумаст̆. Унăн базисенче лаша кӳлмели таврашсем пĕрре те çук. Вĕсене тупма та шутламаççĕ, çитменнине Чăвашсойуз руководителĕсем çак таварсем çураки вăхăтĕнче пирĕн республикăра мĕн чухлĕ кирлине те каласа параймаççĕ. Питех те шел, анчах вăл—факт.

Çураки вăхăтĕнче суту-илӳ ĕçне анлăн сарасси халĕ хăрушлăхра. Суту-илӳ организацисем, уйрăмăнах Чăвашсойуз, çак ĕçе пуçарма нихăш йенчен те тĕплĕн тытăнман-ха. Чи пирвайхи ыйту, чи кирли — вăл кадрсем. Çуркуннехи вăхăтра вырăнсене тухса куçса çӳрекен ларйоксенче ĕçлекенсем, йешчĕксемпе çĕклесе çӳресе ал вĕççĕн сутă тăвакансем, пĕчĕк будкăсенче ситро, квас тата ытти тутлă шывсемпе сутă тăвакансем нумай кирлĕ пулаççĕ. Вĕсене тупса вĕрентес пулат̆, хатĕрлес пулат̆. Анчах ку ĕçе те йĕркелĕн тытăнман-ха.

Суту-илӳ тăвакан организацисенче кадрсене, стахановецсене, отличниксене кирлĕ пек пулăшса пыни, кадрсене куллен вĕрентни, вĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслени, тăшмансенчен, йурăхсăр етемсенчен хăйулăн тасални çителĕксĕр. Çавăнпа унта пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ те. Суту-илӳ тăвакан организацисенче, çав шутрах Чăвашсойузра ĕçлекенсем те, хăйсем начар ĕçленине тĕрлĕрен обйективлă сăлтавсемпе витсе, хӳтĕлесе хăварма тăрăшаççĕ. Час-часах вĕсенчен çакна илтме пулат̆: тавар çук, çавăнпа суту-илӳ вăйсăр пырат̆, теççĕ. Ку—вĕсен йуратнă сăлтавĕ. Çав вăхăтрах хăйсем кӳрсе килме пулнă таварсене вăхăтра илсе килме тăрăшмаççĕ, пур таварсене те сутма пĕлмеççĕ. Пирĕн сахăр, тăвар, махоркă, спичкă, супăњ т. ыт. çавнашкал куллен кирлĕ таварсем çук тесен, кам ĕненме пултарĕ? Никам та ĕненес çук! Çав вăхăтрах Чăвашсойуз работникĕсем çакна ирĕксĕрех „ĕнентересшĕн“. Чăваш республикинче акă 24 йалпора спичкă çук, 11 йалпора махоркă çук, 4 йалпора сахăрпа тăвар çук. Сăлтавĕ—суту-илӳ организацисен руководителĕсем васкаварлă, çивĕч ĕçлеменнинче. Чăвашсойуз пĕрремĕш кварталта таварсем кӳрсе килмели плана мĕн пурĕ те 24 процент çеç тултарнă.

Çакăнпа пĕрлех тата суту-илӳ организацисем, вырăнти промышленнăç, аласта ертелĕсем тăвакан таварсемпе сутă тăвас ĕçе ку таранччен те тивĕçлĕн тытăнманни—пысăк чăрмав кӳрет. Калас пулат̆: кунта пĕр суту-илӳ тăвакан организацисем çеç айăплă мар. Сутă тăвакан работниксем вырăнта туса кăларнă таварсен пахалăхĕ—начар, хакĕ—хаклă, тесе тĕрĕс ӳпкелешеççĕ ĕнтĕ. Çакна вырăнти промышленнăçра ĕçлекенсен шута илмелех. Акă пĕр тĕслĕх: Кутемерти аласта ертелĕ туса кăларакан повидлăн пĕр килограмĕ Украинăран кӳрсе килекен повидлăран 65 пус хаклăрах ларат̆.

Суту-илӳ организацисен умĕнче кăçал пит те ответлă, пысăк ĕçсем тăраççĕ.

Чăвашсойузăн 1938 çулта тавар çаврăнăш планне 159 мĕлйун тенкĕлĕх çирĕплетнĕ. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, кăçал 24 мĕлйун тенкĕлĕх ытларах тавар сутмала, вăл тавара потребителсем патне çитермеле.

Чи малтан потребкоопераци ĕçĕнчи сăтăрлă, бухаринла-троцкисла етемсен сăтăрла ĕçĕн йулашкийĕсене хăйулăн, хăвăрт пĕтерсе пырас пулат̆. Халăх тăшманĕсем кооперацине кĕрсе вырнаçса суту-илӳре сăтăрла ĕçсем тунă, вĕсем кооперацине массăран уйарма, куллен кирлĕ таварсемпе суту-илӳ тăвас ĕçе сӳнтерсе лартма, суту-илӳ организацисен финанс, учотпа отчот ĕçне арпаштарса, потребителсен хушшинче кăмăлсăрлăх сарма хăтланнă, хăтланаççĕ те. Çаксене йаланах асра тытмала. Коопераци организацисене йурăхсăр етемсенчен, растратчиксенчен, пурлăха тустаракансенчен тасатса пымала. Халĕ растратă пĕтсе пырас вырăнне, ӳссех пырат̆-ха. Потребкоопераци организацисен çак сийенлĕхпе çивĕчĕн кĕрешни кирлĕ. Растратăпа кĕрешес ĕçе пайщиксене, ревизи комиççи членĕсене хутшăнтармала, кашни магазин, лавка çумĕнче лавка комиççисем тумала, суту-илӳ ĕçне тĕрĕслес ĕçе массăна активлăн хутшăнтармала. Растратчиксемпе, пурлăхсене тустаракансемпе кĕрешессинче потребкооперацине судпа следстви органĕсен пулăшас пулат̆: судра пăхса тухмали ĕçсене вăрахха йамасăр пăхмала, айăплă çынсенчен тивĕçлĕ укçа-тенкĕсене хăвăрт шыраса илмеле.

Чăвашсойузăн, парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсен хаљхи вăхăтра райсойузсен тăвас тĕлĕшпе татăклăн ĕçлемеле, пултаракан, суту-илӳ ĕçне чĕререн йуратакан çынсене райсойузсене лартмала. Парти райкомĕсен суту-илӳ организацисене хутран-ситрен кăна мар, куллен, тăтăшах пулăшса пырас пулат̆.

Суту-илӳ ĕçне тӳрĕ ĕçлекен çынсене лартса, пайщиксемпе йаланах таччăн çыхăнса ĕçленипе, тавар илекенсене кăмăллăн йышăнса, магазинсенче, лавкасенче çирĕп йĕрке туса советлă, чăн-чăн куљтурлă суту-илӳ ĕçне организацилемеле. Потребкооперацинче ĕçлекенсен пайанхи тĕп ĕçĕ çакăнта пулат̆.

Йулашки хыпарсем

ЛИТВА ТЕЛЕГРАФ АГЕНТСТВИ ПĔЛТЕРНИ

Литва пичечĕ Литва телеграф агентствин çакăн пек пĕлтерӳне пичетлесе кăларнă:

„Йулашки кунсенче пулса пыракан событисене май çакăн пек сăмахсем сарăлаççĕ: правителствă Пољшăна, пичетре пĕлтернисемсĕр пуçне, тата ытти хăшпĕрисене пама пулнă пулат̆. Правителствă çыннисем татăклăнах çапла паллă туса калаççĕ: Литва, ытти государствăсемпе çыхăну тытса пурăннă пекех, Пољшăпа та çавăн пек дипломатилĕ çыхăну пуçласа йама килĕшнĕ. Кунсăр пуçне, Пољшăн малашне Каунасра пулакан посољствăна тата Литван Варшаврi посољствине, ытти государствăсен посољствисем мĕнле правасемпе усă кураççĕ, вĕсене те çавăн пек правасем пама пулнă. Çаксемсĕр пуçне, пичетре пичетлесе кăларнисемсĕр пуçне, Литва Пољшăна урăх нимĕн те пама пулман“.

○★○

Митинг туса иртернĕ

Америкăра пурăнакан Литва гражданĕсем—пĕтĕмпе 2.500 çын Њйу-Йоркра митинг туса иртернĕ. Митингра пулнисем йышăннă резољуцире Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правителствинчен Пољшăпа тата Йевропăри ытти агреçилĕ çĕршывсемпе дипломатилĕ çыхăну тытассине татма ыйтаççĕ.

ССР Сойӳзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

„Таймыр“, „Мурман“, „Мурманец“, тата „Йерман“ суднăсен екипажĕсемпе експедици составне наградă парасси çинчен

Куçса çӳрекен „Çурçĕр пољусĕ“ станцинчи папанинцăсене пăр çинчен илсе тухас тĕлĕшпе правителствă панă заданине чаплăн пурнăçа кĕртнĕшĕн „Таймыр“, „Мурман“, „Мурманец“ тата „Йермак“ суднăсен екипажĕсемпе експедици составне çакăн пек наградăсем парас:

Ленин орденĕ

1. Б. Д. Барсукова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн капитанне.
2. И. Ф. Котцова — пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн капитанне.
3. И. Н. Улйанова—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднă капитанне.
4. А. В. Остаљцева—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароход çинчи експедици начаљникне.
5. Г. П. Власова—пилота.

Вĕсене кашнинех укçан вуншар пин тенкĕ преми парас.

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ

1. А. С. Дорофейева—авиаштурмана.
2. Л. А. Умовскине—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн Çар комиссарне.
3. И. Т. Усачова—штурмана.
4. Д. А. Славныйа—штурман-електрика.
5. В. Д. Ушакова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароход капитанĕн дубљерне.
6. А. И. Рйасина—подрывнике.
7. В. В. Похмелнова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн штурманне.
8. А. И. Пухова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн Çар комиссарне.
9. З. П. Братанова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн аслă машинистне.
10. М. А. Дйакова—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн помполитне.
11. А. И. Зосимова—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн радистне.
12. Л. А. Гаухмана—ОРЛ начаљникне.
13. А. С. Гребенщикова—Мурманск хулинчи НКВД уйрăмĕн начаљникне.
14. Й. Г. Бабаченкона—ПСК(б)П Мурманск окружкомĕпе хула комитечĕн секретарне.
15. В. В. Ворожцова—„Йермак“ пăрçĕмĕрен радиотехникне.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ

1. П. И. Михайлова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн аслă механикне.
2. И. Д. Грабељникова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн радистне.
3. Ф. И. Хромцова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн боцманне.
4. Н. П. Старковскине—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн рулевойне.
5. А. М. Иванова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн аслă водолазне.
6. Б. П. Архирейева—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн аслă водолазне.
7. В. А. Лобзина—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн аслă механикне.
8. И. А. Худйакова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн боцманне.
9. И. А. Ровчене—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн штурман-електрикне.
10. Н. Н. Љубова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн рулевойне.
11. Л. И. Йаровицина—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн аслă радистне.
12. Й. А. Аптекарева—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн штурманне.
13. В. Г. Йаковлева—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн штурманне.
14. А. И. Легкине—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн аслă механикне.
15. А. М. Стрелкова — тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн боцманне.
16. В. И. Левицкине—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн матросне.
17. И. А. Попова—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн матросне.
18. Ф. М. Гољашева—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн матросне.
19. С. И. Тараборина — тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн матросне.
20. М. А. Йевсейева — 35-мĕш №-лĕ завод маçтăрне, пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходпа ишнĕскерне.
21. В. П. Мелешкона—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароход çинчи аслăлăх работникĕсен ушкăнĕн начаљникне.
22. П. А. Рудакова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн гидробиологне.
23. К. П. Малинина — „Йермак“ пăрçĕмĕренĕн аслă механикне.
24. С. Й. Кабачкова—„Йермак“ пăрçĕмĕренĕн аслă кочегарне.
25. М. С. Овчинникова—„Йермак“ пăрçĕмĕренĕн аслă машинистне.
26. И. П. Мартушина—„Йермак“ пăрçĕмĕренĕн боцманне.
27. И. С. Нестерова—Çурçĕр тинĕс çулĕн Мурманскри управленин начаљникне.
28. В. Л. Доброжанскине—ОРЛ тĕпчев пайĕн начаљникне.
29. Й. И. Иванова—ОРЛ производствă начаљникне.
30. В. Г. Пĕтухова — „Йермак“ пăрçĕмĕренĕн аслă радистне.
31. С. М Семенова— Çыхăну халăх комиссариачĕн Мускаври радиотехникă узĕлĕн началникне.

Знак Почета орденĕ

1. В. И. Воронина—„Йармак“ пăрçĕмĕренĕн капитанне, малтан Ленин орденĕпе, Хĕрлĕ Çăлтăр тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăланăскерне.
2. Н. В. Королева—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароход капитанĕн аслă помошникне.
3. Л. М. Федосейева—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн штурманне.
4. С. Д. Барандина—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн иккĕмĕш механикне.
5. П. А. Сергейева—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн аслă радистне.
6. Н. Й. Перевалова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн матросне.
7. П. И. Черужова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн матросне.
8. А. М. Хабирова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн аслă машинистне.
9. Ф. В. Белобокова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн аслă електрикне.
10. В. Д. Карељскине—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн рулевойне.
11. А. И. Уварова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн машинистне.
12. Й. Й. Иващенкона—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн штурманне.
13. Н. А Кулебйакина—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн радистне.
14. В. М. Непомилуйева—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн рулевойне.
15. П. И. Мартынова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн плотникне.
16. Г. И. Котлова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн матросне.
17. В. Ф. Котгова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн аслă машинистне.
18. А. А. Бугайева—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн аслă кочегарне.
19. Й. А. Селиверстова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн аслă кочегарне.
20. А. Н. Ламанова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн аслă кочегарне.
21 Л. П. Серебрйакова—пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароходăн кочегарне.
22. П. А. Полисадова — тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднă капитанĕн помошникне.
23. Г. И. Григорйева — тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн иккĕмĕш механикне.
24. Н. А. Инкина—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн виççĕмĕш механикне.
25. Ф. А. Пышинскине—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн радистне.
26. С. И. Хросова—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн матрос-водолазне.
27. И. С. Никитенкона—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн матрос-водолазне.
28. Ф. Р. Мирошниченкона—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн поварне.
29. А. А. Изосимова — тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн йунгне (карап çинчи ученик).
30. Б. И. Оленича—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн синоптикне.
31. М. П. Боброва—тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн гидрологне.
32. М. И. Чагина—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн бортмеханикне.
33. В. А. Бречалова—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн бортмеханикне.
34. С. З. Акопйана—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн авиаштурманне.
35. С. К. Авербуха—пăр çĕмĕрекен „Таймыр“ пароходăн синоптикне.
36. И. Н. Халипа—Сойузфотон йатарласа кайнă корреспондентне.
37. Й. С. Виленскине — „Известия“ хаçатăн „Таймыр“ çинчи йатарласа кайнă корреспондентне.
38. Й. М. Славина—„Сойузкинохроникăн“ кинооператорне.
39. М. Б. Черненкона—„Комсомольская правда“ хаçатăн „Таймыр“ çинчи йатарласа кайнă корреспондентне.
40. О. И. Естеркина—„Правда“ хаçатăн „Таймыр“ çинчи йатарласа кайнă корреспондентне.
41. Г. А. Симонова—„Сойузкинохроникăн“ пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароход çинчи кинооператорне.
42. А. С. Финогенова—„Комсомольская правда“ хаçатăн пăр çĕмĕрекен „Мурман“ пароход çинчи йатарласа кайнă корреспондентне.
43. Н. Г. Пастухова—„Йермак“ пăрçĕмĕренĕн помполитне.
44. А. И. Ветрова—„Йермак“ пăрçĕмĕрен капитанĕн аслă помошникне.
45. Г. В. Йерохова — „Йермак“ пăрçĕмĕрен кочегарне.
46. В. С. Степанова—„Йермак“ пăрçĕмĕрен радистне.
47. Л. Б. Хвата—„Правда“ хаçатăн „Йермак“ пăрçĕмĕрен çинчи йатарласа кайнă корреспондентне.
48. С. И. Лоскутова—„Сойузфотон“ „Йермак“ пăрçĕмĕрен çинчи йатарласа кайнă корреспондентне.
49. А. И. Ковалева—ОРЛ инженерне.
50. Друкере — Çыхăну халăх комиссариачĕн Детскосељскри радиостанцин аслă радистне.
51. Т. А. Гаухмана—ОРЛ инженерне.
52. Н. И. Аухтуна—инженера.
53. М. С. Лиçутина — Çурçĕр тинĕс çулĕн Ленинградри управленин тинĕс пайĕн начаљникне.
54. А. М. Прокопенкона—Мурманскри çар порчĕн техникă пайĕн начаљникне.
55. Н.Д. Шчетинина—Çурçĕр тинĕс çулĕн Мурманскри политпайĕн начаљникне.
56. И. А. Белоусова—Çурçĕр тинĕс çулĕн Ленинградри управлени начаљникне.

Пăр çĕмĕрекен „Таймыр“, „Мур- тискер кайăксене тытмали „Мурманец“ суднăн çыннисемпе експедици составне пољарта ĕçленĕ чухне илсе тăнă виçе уйăх ĕçукçи чухлĕ укçан преми парас.

ССР Сойӳзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

ССР Сойӳзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Çекретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремљ. 1938 çулхи мартăн 22-мĕшĕ.

―○―

ССР Сойӳзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗЕ

Пăр çинче куçса çӳренĕ „Çурçĕр пољусĕ“ станцинче пулнисене наградăсем парасси çинчен

1. Правителствăн заданине пурнăçа кĕртнĕ çĕрте паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Сойӳзĕн Геройĕ йатне тата унпа пĕрле Ленин орденĕ парас:

Ернст Теодорович Кренкеле—куçса çӳренĕ „Çурçĕр пољусĕ“ станцин радисне.

Петр Петрович Ширшова—куçса çӳренĕ „Çурçĕр пољусĕ“ станцин ăслăлăх работникне.

Йевгений Константинович Федорва—куçса çӳренĕ „Çурçĕр пољусĕ“ станцин ăслăлăх работникине.

2. Куçса çӳренĕ „Çурçĕр пољусĕ“ станцин начаљникне Совет Сойӳзĕн Геройне Иван Дмитрийевич Папанин йулташа иккĕмĕш хут Ленин орденĕ парас.

3. И. Д. Папанин, Е. Т. Кренкел, П. П. Ширшов, тата Й. К. Федоров йулташсене кашнине 30. 000 тенкĕлĕх укçан наградă парас.

ССР Сойӳзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

ССР Сойӳзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Çекретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремљ. 1938 çулхи мартăн 22-мĕш.

―○―

„Çурçĕр пољусĕ“ станцине хатĕрленĕ тата организациленĕ çĕре хутшăнса ĕçленисене наградăсем панă

ССР Сойуз Верховнăй Совет Президиумĕн указĕпе, куçса çӳренĕ „Çурçĕр пољусĕ“ станцине хатĕрленĕ тата организациленĕ çĕрте пит лайăх ĕçленĕшĕн, çак йулташсене Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ панă:

М. Ф. Бељакова — пĕрлешӳлĕ апатлану ĕçĕнчи инженерсен институчĕн директорĕ;

А. Н. Пољакова—„Каучук“ заводăн снарйажени конструкторĕ.

Çак йулташсене Знак Почета орденĕ панă:

А. А. Белобоковăна—„Каучук“ заводăн бригадир-работници;

А. С. Чечулин—„Йермак“ çинчи експедици врачĕ;

И. Д. Жонголовича—тинĕс-çар академин работникĕ т. ыт. те,—пурĕ 14 çын.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Заочнă вĕренĕве тивĕçлипе йĕркелемеле

Парти, комсомол тата колхоз активне вĕрентес ĕçре ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн массăлă заочнă вĕренĕвĕн системи политикăла пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн Чăваш республикинче 864 коммунис тата колхозри активиссем 845 çын (мĕн пурĕ 1709 çын) заочнă вĕренеççĕ. Вĕсенчен ПСК(б) Парти историне 676 çын; ленинисăма—136 çын; политекономине 52 çын; колхоз, МТС тата совхоз активĕн курсĕнче—845 çын вĕренеççĕ.

Заочнă вĕрентекен институтăн чăваш уйрăмĕ умĕнче тăракан тĕп задачă вăл—çакăнта асăннă вĕренекенсене Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе хĕçпăшаллантарасси, большевикла сыхăлăха ÿстерсе, фашисăм агенчĕсене—троцкисла-бухаринла бандăн йулашкийĕсене тăрă шыв çине кăларса тĕппипех кăкласа пăрахма хĕçпăшаллантарасси пулса тăрать.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1935 çулти октябрĕн 15-мĕшĕнче йышăннă решенийĕнче тата Парти Тĕпкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ 1937 çулти çентябрĕн 4-мĕшĕнче йанă çырăвĕнче вырăнсенчи организацисенче парти вĕрентĕвне тивĕçлипе организацилемели майсем çинчен татăклă кăтартусем пана.

Анчах та пирĕн республикăри парти организацисем Тĕпком кăтартăвĕсене çителĕклĕ таран пурнăçласа пымаççĕ-ха. Нумайах пулмасть Парти Обком бÿровĕ хăйĕн ларăвĕнче партин заочнă вĕрентĕвĕ мĕнле пыни çинчен отчот итлерĕ те çапла каласа хăварчĕ:—„Заочнă вĕренмели институтăн Чăваш республикинчи уйрăмĕ тата парти райкомĕсем вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕнче заочнă вĕренме илес ĕçе тивĕçлипе организацилемен. Çавăнпа та ĕнтĕ парти активĕнчен пĕр пайĕ вĕренме кĕреймесĕр йулнă, вĕренме илнисем хушшинче пĕлÿ тĕлĕшĕнчен пĕр пек маррисем пур. Партин хăшпĕр райкомĕсем (Йĕпреç, Çĕрпÿ т. ыт. те) заочнă вĕренĕве йертсе пырас ĕçрен пăрăнса йулаççĕ. Вĕсем ку ĕçе пĕтĕмпех заочнă вĕрентĕвĕн организаторĕсем çине йăвантарнă. Парти райкомĕ вĕренÿ ĕçĕпе интересленмен, йертсе пыман пиркийĕх ĕнтĕ заочниксем занятисене çителĕклĕ таран хатĕрленмесĕр пыраççĕ, вĕренÿ нахалăхĕ начар. Конференцисем иртерес вăхăта заочниксем кĕнекесем вуласа, занятине хатĕрленсе иртереççĕ.

Заочниксем лайăх вĕренсе пырасси вăл—конференцисем хушшинчи вăхăтра консультацисем туса ирттернинчен те нумай килет. Анчах консультацисем сахал пулаççĕ, нумай чухне пулмаççĕ те. Радиолекцисене те çÿремеççĕ. Заочнă вĕренмели институтăн республикри уйрăмĕпе обкомăн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ заочниксемпе консультаци ирттерессине çителĕклĕ организацилемен. Вĕсем конференцисем ирттерме кăна инструкторсем йăраççĕ, консультаци валли инструкторсем çук. Нумай районсенче заочниксене консультаци пама пултаракан пропагандиссем сахал. Çавăнпа та, консультаци ирттерме Шупашкартан инструкторсем йăма кирли паллах.

Хăшпĕр районсенче заочниксен конференцине пуçтарасси питĕ те начар пулса пырать. Ишлей районĕнче заочниксене конференцине пухас тесе, февралĕн 14—19-мĕшĕсенче кашни кун телефонпа чĕннĕ. Заочниксем çапах та пурте пуçтарăнса çитмен. Куçков заочник тăваттăмĕш кунне кăна пынă.

Тăрăшса вĕренекен заочниксем питĕ пысăк çитĕнÿсем тăваççĕ. Акă Шăмăршă районĕнче ПСК(б) Парти историне повышеннăй курсра вĕренекенсем 4 конференцире 6 тема тăрăх зачотсем пана. Уйрăмăнах Воронцов Н., Карпов Михаил, Матвейев А., Корчагин В. йулташсем лайăх вĕренсе пыраççĕ. Çĕмĕрле районĕнче—Никитин, Шибайев, Демидов йулташсем; Йĕпреç районĕнче—Рйабчиков йулташ; Тутаркас районĕнче—Анисимов, Иванов йулташсем лайăх вĕренсе пыраççĕ. Аван вĕренекенсем республикра татах та нумай.

Заочнă вĕрентекен институтăн Чăваш республикинчи уйрăмĕпе парти райкомĕсен заочнă вĕренÿри пур çитменлĕхсене те хăвăртрах пĕтерсе, ĕçе тивĕçлипе организацилемеле.

Парти историне вĕренмели кружокра

Финанс халăх комиссариачĕ çумĕнче ПСК(б) Парти историне вĕренмели кружок пур. Кружок организациленнĕ чухне (кăçалхи йанвар уйăхĕнче) кружокра 21 çын пулнă:—парти членĕсем 11, комсомолецсем 4, партире тăманнисем 6 çын. Халĕхи вăхăтра ку кружокра 18 çын вĕренет.

Тÿрех калас пулать, кружока вĕренекенсен пĕлÿлĕхне пăхса илмен. Институтсенчен вĕренсе тухнисемпе пĕрлех, сахал вĕреннĕ йулташсем ларыççĕ.

Вĕренекенсем занятисене нумай чухне пымасăр сиктерсе хăвараççĕ. Мартăн 10-мĕшĕнче 18 çын пырас вырăнне 6 çын кăна пынă. Занятине тĕрлĕ сăлтавсемпе пымаççĕ: хăшпĕрисем „командировкăна", „ларусене" кайаççĕ, нумай чухне пĕр сăлтавсăрах вĕренÿрен йулаççĕ. Ку кружокра 6 занятие ирттернĕ. Çак 6 занятине пĕр сиктермесĕр пыраканни пĕр çын анчах. Вĕсенчен нумайĕшĕ кружок ĕçлеме тытăннăранпа занятинче ик-виçĕ хутран ытла пулман.

Çак кружок руководителĕ Ильйин йулташ, хăйĕн пĕлÿвĕ çителĕксĕр пирки, вĕренекенсене кирлĕ пек ăнлантарса параймасть. Занятисенче вĕренекенсен умне тема тăрăх татăклă ыйтусем кăларса тăратас вырăнне, сапаланса кайать. Çавăн пекех вăл вĕренекенсемшĕн уççăн, ăнланмала выводсем тумасть. Паллах ĕнтĕ, кун пек чухне занятисем çийелтен, пур ыйтусем çинчен те пĕтĕмĕшле калани пе иртсе кайаççĕ. Вĕренекенсем хăйсем ыйтусене активлăн сÿтсе йавмаççĕ.

Финанс халăх комиссариачĕ çумĕнчи ПСК(б) Парти историне вĕренмели кружокăн çак йăнăшсене халех тÿрлетмеле.

Х. Р.

Комсомол Тĕпкомĕн Пленумĕ йышăннă решенисене сÿтсе-йаваççĕ

Çак кунсенче Чăвашсен аероклубĕнчи комсомол организацийĕн пухуvĕ пулса иртрĕ. Пуху комсомол Тĕп Комитечĕн V-мĕш Пленумĕ йышăннă решенисене сÿтсе-йаврĕ.

Комсомол Тĕпкомĕн Пленумĕ йышăннă решени аероклубри комсомол организаци умне те пысăк задачăсем кăларса тăратать.

Пухура тухса калакансем аероклубри комсомол организацин кулленхи ĕçре пулса пынă йăнăшĕсене вирлĕнех астутарчĕç.

ПСÇЛКС Тĕпком Пленумĕ кăтартса панă çитменлĕхĕсем пирĕн комсомол организацинче те пулса пынă. Епĕр ку тарана çитсе, Позднякова комсомолкăн кăларнă ыйтуvа тепĕр хут пăхса тухман. Çав вăхăтрах унăн зайавленийĕсем папкăсем хушшинче 11 уйăх выртаççĕ.

Аероклубра ку вăхăта çитсе пĕр комсомолеца та парти ретне паман. Çав вăхăтрах парти ретне кĕме Гарйакин, Шипунов, Лунев т. ыт. йулташсем хатĕрленсе çитнĕ. Вĕсем Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн парăнса ĕçлекен çынсем. Ку йулташсем политикла ыйтусемпе те çителĕклĕ пĕлÿ илнĕ. Апла пулсан та, комсомолецсене парти ретне кĕме пулăшасси çине пайанхи кунччен те комсомол комитечĕ çаварăнса пăхман.

Комсомолтан йăнăш кăларнисем те пулнă. Александров комсомолец арăмĕ Кооператив техникумĕнче библиотекăра ĕçленĕ. Вăл пĕр ирхине шкапсенчен кивелнĕ кĕнекесене тасатнă. Çак вăхăтра вĕренекенсенчен пĕри пĕр кивелнĕ кĕнеке ыйтмасăрах йăтса кайнă. Александров арăмĕ асăрхаса та йулайман. Çакăншăн ăна халăх тăшманĕ тесе ĕçрен кăларса йанă. Кун хыççăн Александрова та тăшманла хĕрарăмăн упăшки тесе комсомол ретĕнчен кăларса пăрахнă.

ПСÇЛКС Тĕпком Пленумĕн решенийĕсене çирĕппĕн вĕренес, политикла пĕлÿлĕхе ÿстерес большевикла сисĕмлĕхе çивĕчлетес, пулнă йăнăшсене тÿрлетсе пырас тата малта пыракан çамрăксене комсомола илес тĕлĕшпе пуху татăклă решени йышăнса хăварчĕ.

В. Цыпленков.

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билечĕсене кăтартулăн сарар

Мартăн 20-мĕшĕнчен пуçласа Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене сарас ĕç пуçланчĕ. Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ:—„Хамăрăн Хĕрлĕ çара, Хĕрлĕ флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Нимĕнле „ăнсăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивччĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизациллĕ хатĕр тытса тăмала..." тесе чĕнни пе пурнăçа кĕртес тесе, тата тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăпнă фашисла агентсен тискер ĕçĕсене хирĕç ответлесе, Осоавиахимăн нумай мĕлйунлă масси, пирĕн çĕршывăн 170 мĕлйунлă халăхĕ ыйтнипе правительствă Осоавиахима 12-мĕш лотерейă билечĕсене кăларма ирĕк пачĕ.

Рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийĕ çак 120 мĕлйун тенкĕлĕх тухакан лотерейă билечĕсене хапăл тусах йышăнчĕç, мĕншĕн тесен ку лотерейă пирĕн çĕршывăн оборонă хăватне тĕреклетме пулăшать. Çавăнпа та Осоавиахим лотерейĕсем çинчен пĕтĕм халăх пĕлсе тăрать, вĕсем ăнăçлăн сараласçĕ. Çак тĕслĕхсем совет халăхĕ Ленин—Сталин партине, хăйĕн правительствине, тăван çĕршывне чĕререн йуратнине, социалисăм çĕршывĕн оборонă ĕçне çирĕплетме хатĕр пулнине кăтартса параççĕ, ССР Сойузĕнчи халăхсен пурнăçĕ çулран çул ÿссе, лайăхланса пынине кăтартаççĕ.

Осоавиахим обшчестви туса ирттерекен лотерейă—билетсене сутни тата выляса илнисене валеçсе пани çеç пулмасть. Лотерейă вăл — политикăлă тата массăлă пысăк ĕç, ку ĕçе мĕлйуншар халăхсем хутшăнаççĕ. Лотерейă пĕтĕм оборонă ĕçне вăйлатма, Осоавиахимăн пуçламăш организацисене, обшчествăн вĕренÿ организацисене çирĕплетме пулăшмала.

Лотерейă кампанине оборонă ĕçне вăйлаатассипе çыхăнтарса ирттермеле. Сăмахран, Куславкка районĕнчи Тĕрлемесри организаци (председателĕ Герасимов йулташ) 11-мĕш лотерейă билечĕсене хăйсен организацисенче 1500 тенкĕлĕх сарнă, социалисăмлă ăмăртуvа организациленипе ытти пуçламăш организацисенче те лотерейăна ăнăçлăн сарма, оборонă ĕçне лайăхлатма пулăшнă.

Лотерейă билечĕсене сарас ĕç хăй тĕллĕн пулма пултараймасть, ку ĕçе организацилени кирлĕ.

Пĕлтĕрхи çул Осоавиахимăн 11-мĕш лотерейă билечĕсене Улатăр, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри хула организацисем лайăх сарчĕç. Пăрачкав районĕ 15000 тенкĕ сарма обйазателствă илнĕ пулин те, 3.400 тенкĕ сармасăр хăварнă. Вăрнар районĕ 12.000 тенкĕрен 3.700 тенкĕ, Канаш районĕ 25.000 тенкĕрен 5000 тенкĕ сармасăр хăварнă. Çак асăннă районсенчи Осоавиахим организацисен руководителĕсем оборонă ĕçне вăйлатассинче пысăк сийен туса пачĕç, ку Осоавиахимра пулнă Ейдеманăн шпионла агенчĕсене çеç усă пулнă.

Иртнĕ çулсенче лотерейă билечĕсене сарнă вăхăтри активиссене, ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлас кампани вăхăтĕнчи агитаторсене ку ĕçе йавăçтармала. Билетсене сарнă вăхăтрах 11-мĕш лотерейă билечĕсем тăрăх выляса илнисене тĕрĕслесе пымала.

Пирĕн Чăваш республикинче 11-мĕш лотерейă билечĕсемпе пысăк выдавсем илни пулнă. Ишлей районĕнче пĕр колхозник автомашинă илнĕ. Канаш районĕнчи Смелов Й. мотоцикл, пединститутри студенткă Анфиса Николайева 3000 тенкĕ выляса илнĕ тата ыт те.

Кашни ĕçсыннинех, вăл 12-мĕш лотерейă билетне илсе, Совет Сойузĕн оборонă вăй хăватне çирĕплетме пулăшнине, çĕнĕ аероклубсем, вĕренÿ пункчĕсем, лагерсем, пăшал пемели вырăнсем, оборонă пурлăхĕсем илме пулăшнине ăнлантарса парас пулать.

12-мĕш лотерейă 120 мĕлйун тенкĕлĕх пулать, билетсем икĕ купÿрлă: 1 тенкĕлĕх билетсем 67,5 мĕлйун, 3 тенкĕлĕх—17,5 мĕлйун. Лотерейăн пĕр тенкĕлĕх тата виçĕ тенкĕлĕх билечĕсемпе уйрăмăн икĕ тираж пулать. Пĕр тенкĕлĕх билетпа танлаштарсан кашни 3 тенкĕлĕх билетпа выляса илессине виçĕ хут ытларах шанма пулать.

Выляvра „М-1" çăмăл автомашинăсем, мотоциклсем, ССР Сойузĕ тăрăх курса çÿремели путовкăсем, велосипедсем, пианиносем, ухата пăшалĕсем, пĕчĕк калиберлă винтовкăсем, сехетсем т. ыт. те пулаççĕ.

Социалисăмлă тăван çĕршывăн ĕçсыннисем иртнĕ лотерейăсене активлăн хутшăнса çĕршывăн оборонă фондне 450 мĕлйун тенкĕ пачĕç.

12-мĕш лотерейă пирĕн Осоавиахим обшчествине, рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государствин оборонă вăй-хăватне татах та ытларах çирĕплетме, тĕреклетме пулăшĕ.

Федотов.



Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă уйрăм çарăн № чаçĕнчи хĕллехи вĕренÿсем. ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Тупăна „çапăçуvа" хатĕрлеççĕ. (1938 ç. февралĕнче ÿкернĕ). Л. Великжанин фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билечĕсене илеççĕ

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билечĕсене кăларнине ырласа Шупашкарти пур фабрик-заводсенче, предприйатисенче, учреждениceнче, шкулсенче хаваслă пухусемпе митингсем пулса иртеççĕ. Ĕçсыннисем пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса лотерейă билечĕсене çырăнса илеççĕ.

Мартăн 21-мĕшĕнче почтăра ĕçлекенсен пухуvĕнче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă çинчен ăнлантарнă хыççăн 2.200 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Икĕ кун хушшинче аероклуб коллективĕ—600 тенкĕлĕх, Халăх хуçалăх учочĕн тытăмĕнче—375 тенкĕлĕх, допризывниксем—250 тенкĕлĕх, йалхуçалăхĕн коммунисла аслă шкулĕнче—2500 тенкĕлĕх, стройтрестра ĕçлекенсем хушшинче 1500 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Мартăн 22-мĕшĕнче Госпланра ĕçлекенсем лотерейă билечĕсене 228 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

Перекет кассинче ĕçлекенсем лотерейă билечĕсене 221 тенкĕлĕх çыраннă. Вĕсем мартăн 22-мĕшĕнче, никамран малтан, лотерейă билечĕсемшĕн укçине пухса çитерсе Госбанка пырса хучĕç.

В. Василйев.

3 тенкĕрен кайа мар

Шупашкар хулинчи допризывниксем хушшинче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне сарасси анлăн саралса пырать. Росснабсбытра ĕçлекен Сергейев допризывник 10 тенкĕлĕх илчĕ.

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билетне çырăнса илесси уйрăмăнах стройтрестра ĕçлекен допризывниксем хушшинче аван пырать. Кунта 3 тенкĕрен кайа çырăнакансем çук. Уйрăм допризывниксем, Йермаков, Антонов, Иванов т. ыт. те 5 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

— Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билетне кăларни, вăл пирĕн тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме пулăшать. Епĕ тăван çĕршыва сыхлама, ăна çирĕплетме йалан хатĕр,—тет пуштă тытăмĕн автобазинче ĕçлекен допризывник Петров йулташ. Вăл лотерейă билетне 5 тенкĕлĕх çырăнчĕ.

В. Цыпленков.

150 кубла метр хăйăр хатĕрленĕ

ЙЕТĔРНЕ. Кăташ йалсоветĕнчи „Пионер" колхоз вырăнти çулйĕре йусас ĕçе тытăнчĕ. Ку тĕлĕшпе йатарласах бригадă организациленĕ. Бригадăна комсомолец Т. Алексейев йулташ йертсе пырать. Çак кунсенче вĕсем 150 кубла метр хăйăр турттарса хатĕрлерĕç. Халĕ ытти строителствă материалĕсене хатĕрлеççĕ.

М. Моисейев.

Ф. Архипов

Колхоз производствинчи ĕçе тĕрĕс организацилемеле

1938 çулта гектартан 100 пăтран кайа мар тĕштырă туса илес кĕрешÿре, агротехникăла пысăк ĕçсемсĕр пуçне, ĕçе тĕрĕс организацилени, ĕçре обезличкăна пĕтерни, лашасемпе машинсен вăйĕсемпе пĕлсе усă курни паллă вырăн йышăнса тăрать.

Кунта епĕр, колхозсенче ĕç вăйне тĕрĕс организацилес тесен, бригадăсемпе звеносене мĕнле йĕркелемели тата ĕç нормисемпе тÿлес йĕркесем мĕнле пулмали çинчен кăтартса парасшăн.

I. Йаланхи уйĕç бригадисене организацилесси çинчен

Йаланхи уйĕç бригадисене организациленĕ чухне уйрăмăнах çак йĕркесене пăхăнмала:

бригадăсен çĕр участкисем, май килнĕ таран пĕр пекрех пулмала, çавăн пекех çĕрĕн пахалăхĕ те пĕр пекрех пулмала;


ĕç хатĕрсене (йалхуçалăх машинисемпе инвентарсем, лаша вăйĕ) бригадăн çĕр участки тăрăх, механизаци вăйĕсене хисепе илсе, уйăрса памала;

ĕç вăйĕсемпе туртăм вăйĕсене бригадăри ĕçсене кĕске вăхăтра туса пĕтерме кирлине, тата уйрăм вăхăтсенче ĕçсем хĕрÿлĕн килсе тухассине хисепе илни тăрăх çителĕклĕ таран уйăрса памала.

Йалхуçалăх производствинчи пысăк çитменлĕх вăл—уйрăм колхозсенче ĕçсене черет тăрăх туса пыни пулать. Черет тăрăх ĕçлесе пырассине пултарнă таран пĕтермеле. Кăна йалан ĕçлекен бригадăсен ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе йанипе, вĕсен ĕçне çирĕп план тăрăх туса пынипе пĕтерме пулать. Ĕçе план тăрăх тата вăхăтра туса пырас тесен, бригадăсенче чи хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче вăл—тырпулсене пухса кĕртессипе авăн çапас ĕçсем кĕреççĕ. Ку ĕçсем кĕлте кÿртес, государствăна тырă тăратас, кĕраки тăвас ĕçсемпе пĕр вăхăтра килсе тухаççĕ. Çак ĕçсене пурне те пĕр вăхăтра тата кĕске срукра туса ирттермеле. Çак тапхăр бригадăсен пысăккăшĕ мĕн пек пулмалине кăтартакан тапхăр пулать.

Тĕслĕхрен, колхозри уйĕç бригадин пысăккĕшĕ мĕн пек пулмалине илсе кăтартатпăр:

№№	ĔÇ ЙАЧĔСЕМ	Ĕç вăйĕ кирлĕ	Лашасем кирлĕ
1.	МК 1100 молотилкăпа авăн çапма	32	5
2.	Мĕн чухлĕ инçине шута илсе, кĕлте турттарма	6	4
3.	Тырă тăратма	4	4
4.	Тырă суртлама	4	1
5.	Лашапа ĕçлемели пĕр сеялкă çинче кĕрхи тырă акма	3	3
6.	Бригадăри шалти ĕççене тума	5	1
	Пĕтĕмпе:	54	18



Çакăнтан ĕнтĕ, бригадăра 50—60 çын таран ĕç вăйĕ тата 12—18 лаша пулма кирли курăнать. Бригадăра тырпула комбайнпа пухса кĕресçĕ пулсан, ĕç вăйĕ 50 çын таран, йе унтан та кайарах пулма пултарать.

Ĕç вăйĕ сахалтарах çирĕплетсе панă бригадăсенче, сăмахран, Вăрмар районĕнчи „Большевик", Патăрйел районĕнчи Красин йачĕпе тăракан колхозсенчи бригадăсенче, час-часах социалисăмла пулăшу йĕркипе усă кураççĕ, вара вĕсем ĕç вăйĕсемпе лашасене пĕр бригадăран тепĕр бригадăна куçарма тытăнаççĕ. Çакăн пек йĕрке вара час-часах бригадăсенче обезличкă туса хурать.

Обезличкă пулни тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх тĕрĕс валеçес ĕçе чăрмантарать. Тупăшсене ĕçĕн хисепĕпе пахалăхĕ тăрăх валеçмеле. Кам нумайрах тата лайăхрах ĕçленĕ, çав нумайрах илет, кам начар ĕçлет, вăл—сахал илет. Кун пек йĕркене колхоз производствинче кашни бригадă тата кашни колхозник ĕçне уйрăмăн хисепе илнипе çеç пурнăçлама пулать.

II. Производствăлă бригадăра звеносем организацилесси

Бригадăн шалти йĕркине организацилес ĕçри тĕп задачăсем çаксем пулаççĕ:

Ĕçхатĕрĕсемпе усă курнă çĕрте тата тĕрлĕ ĕçсенче обезличкăна пĕтересси;

Ĕç хатĕрсене, ĕç вăйĕсемпе лаша вăйĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухни тăрăх, ĕç кунĕпе туллин усă курса ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырасси;

Ĕç пахалăхĕшĕн, ĕç дисциплинишĕн кĕрешесси, стахановла ĕçлессине найанлăха пĕтерессине.

Çак асăннă задачăсене бригадăсенче ĕçе звеносем тăрăх организаленипе пурнăçлама пулать.

Пĕр ĕçе тепĕр ĕçрен хăвармала мар ĕçсенче пĕрлешÿлĕ (комбинированнăй) звеносем тумала.

Малала епĕр çуракинче ĕçлеме пĕрлешÿлĕ звеносене мĕнле организацилеме кирлине кăтартакан тĕслĕх илетпĕр.

Пĕрлешÿлĕ звено хисепĕ мĕн пысăкĕш пулмали—йертсе пыракан машинăран килет. Çуракине илес пулсан, кун пек машинă вăл сейалкă пулать.

Бригадăн çуракинче 75 гектар акмала тесе илĕпĕр. Сейалкăпа кунне 10 гектар акма пулать пулсан, пĕрлешÿлĕ звенора çаксем пулаççĕ.

№№	ĔÇ ЙАЧĔСЕМ	Пĕр машинăпа кунне мĕн чухлĕ ĕçлеме пултарни	Машинăсен хисепĕ	Пĕтĕм ĕç тухăçлăхĕ	Кирлĕ: Ĕç вăйĕ	Кирлĕ: Лашасем
1.	Икĕ касăлă плугпа сухаласси	1.5	5	7,5	5	10
2.	Сÿрелесси	2,5	3	7,5	1	3
3.	Иккĕмĕш кунĕнче акасси	10,0	1	10,0	2	4
	Пĕтĕмпе	—	—	—	8	17

Акана тухнă малтанхи кун пĕтĕм ĕç лашисем тата сейалкăпа ĕçлеме çирĕплетнĕ колхозниксем 4 лашапа суха тăваççĕ, вĕсем пĕр кун хушшинче 3 гектар сухалаççĕ. Çапла ĕнте çак кун акмашкăн 10,5 гектар çĕр сухаласа хатĕрлеççĕ.

Иккĕмĕш кунĕнче 10 лаша тата 5 çын сухалама, 3 çын тата 3 лаша сухалани хыççăн сÿрелеме тытăнаççĕ.

Сейалкăпа ĕçлеме малтанхи кун хатĕрленĕ 10,5 гектар çĕр пулать, çапла вара сейалкăпа татти-сыпписăр ĕçлеме май пулса тăрать. Улттăмĕш кунĕнче 60 гектар çинче тĕштырăсем акасси сухалас тата сÿрелĕс ĕçсемпе пĕр вăхăтра вĕçленет.

Çиччĕмĕш кунĕнче звено кайа йулса акакан культурăсем çине куçать. Икĕ кун хушшинче татах та 15 гектар акса хăвараççĕ.

Çапла ĕнтĕ ĕç вăйĕсене, ĕçе тĕрĕс организацилесен, асăннă звено 8—10 ĕçлекен çынпа тата 17 лашапа 75 гектар çĕр çинче çуракине агротехникă катартнă срукçенче ăнăçулăн туса ирттерет.

Çуракинче сейалкăсемпе туллин усă курмала. Çакна шута илсе кашни сейалкă пуçне 4 лаша пăхрăмăр. Вĕсем сменă тăрăх талăкра 14—16 сехет ĕçлеççĕ. Епĕр тĕслĕхшĕн илсе кăтартнă пĕрлешÿлĕ звено ĕçĕнче вăрлăх турттарма çын тата лаша кирлине кăтартман. Вăрлăхсене сейалкăпа ĕçлекен, сменă хыççăн канакан лашапа турттарать.

Çураки ĕçĕсене тракторпа тунă чухне пĕрлешÿлĕ звенора сÿрепе тата плугпа ĕçлеме çирĕплетнĕ лашасем тата ĕçлекен çынсем трактор хыççăн сÿрелесе пырас ĕçре пулмала. Виç тракторпа талăкра 30 гектар сухалаççĕ пулсан, ку звенори 13 ĕç лашипе кашни лаша пуçне кунне 2,5-шар гектар икĕ хут сÿрелесе пыма аванах ĕлкереççĕ.

Тракторсем тата сÿрелекенсем иккĕмĕш кун ĕçленĕ çĕре акма тытăнмала. Лашапа акакан пĕр сейалкă, тракторпа акакан пĕр сейалкă ĕçлесе, пĕр кун хушшинче 25 гектар акаççĕ. Сухаланă çĕрте 2 трактор йулать, вĕсем тепĕр кунчен (3-мĕш кун) 20 гектар сухалаççĕ. Çапла вара тракторсемпе пурĕ 50 гектар сухалаççĕ, кун хыççăн вĕсем урăх бригадă участки çине куçаççĕ.

Тракторпа ĕçлекен сейалкăпа лашапа ĕçлекен çейалкă иккĕмĕш кунĕнче çак 50 гектар çинче акса пĕтереççĕ.

Тракторсем хыççăн сÿрелесе пынă çĕрте ĕçлекен лашасем 3-мĕш кунне тĕштырă акма 10 гектар, кайа йулса акакан культурăсем акма 15 гектар трактор сухаласа хăварман çĕре ĕçлеме куçаççĕ. Ку участкă çинче лашапа ĕçлекен сейалкă иккĕмĕш кунне акма тытăнать. Малтанхи кун вăл участкă çинче çĕре сухаласа тата сÿрелесе хатĕрлеççĕ. Пĕрлешÿлĕ звенори малашнехи ĕçсем вара малтанхи йĕркепех пулса пыраççĕ.

Обезличкăпа кĕрешессинче колхозниксем çумне машинăсемпе ĕç лашисене йаланлăхах çирĕплетни пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та колхозниксем вĕсемпе çуракине вĕçличченех ĕçлесе пыни кирлĕ. Ку ĕнтĕ çак ĕçре колхозника хăйĕн квалификацине ÿстерме тата ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшать.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырассипе обезличкăна пĕтересси ĕçе уйрăмăн хисепе илнипе çыхăнса тăрать, ăна индивидуаллă сделшчинăпа массăлăн усă курсан пурнăçлама пулать.

Епĕр пĕрлешÿлĕ звеносем организацилес тĕслĕхпе унăн ĕç формисене асăнтăмăр. Колхозра ытти тĕрлĕ ĕçсем те нумай, сăмахран удобрени хывасси, тырăсене апат

Ветеринари работникӗсемпе зоотехниксен канашлӑвӗ

КАНАШ (телефон тӑрӑх). Мартӑн 22-мӗшпе 23-мӗш кунӗсенче зоотехниксен, ветеринари работникӗсен республикӑри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе 1937 ҫулта мӗнле ӗҫленине тата 1938 ҫулхи задачӑсем ҫинчен сӳтсе-йаврӗҫ. Ҫак ыйтусем тӑрӑх Чӑваш Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫумӗнчи ветеринари тытӑмӗн начаљникӗ Захаров тата выљӑх-чӗрлӗх тытӑмӗн аслӑ зоотехникӗ Елкин йулташсем доклад туса пачӗҫ.

Вӗсен хыҫҫӑн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Коротков йулташ сӑмах каласа, выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес йенӗпе халиччен ҫителӗксӗр ӗҫленине хытӑ критиклерӗ.

— Халӑх тӑшманӗ, шпион Чернов тата ытти сӑтӑрҫӑсем выљӑх-чӗрлӗх шутне чакарса пынӑ. Пирӗн республикӑри халӑх тӑшманӗсем Михопаркин, Спиридонов, Ҫӗрӗҫ халӑх комиссарӗ пулнӑ Василйев выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре сӑтӑрлӑ ӗҫсем нумай тунӑ. Тасасывлӑхлӑ выљӑхсене чир йерттерсе вӗлернӗ.

Пирӗн пӗр колхозра та, пӗр фермӑра та выљӑх вилни пулмала мар.

Малала Коротков йулташ выљӑх-чӗрлӗхсене чуптарас ӗҫсем ҫинчен тӗплӗн чарӑнса тӑчӗ.—Ҫак ӗҫе ӑнӑҫулӑн ирттерни, выљӑх-чӗрлӗх шутне нумайлатасси тӗлӗшре тӗп вырӑнта тӑрать. Ветеринари работникӗсем, зоотехниксем ҫак ӗҫре колхозниксем ҫураки иртнӗ чухне ӗҫленӗ пекех тӑрӑшса ӗҫлемеле. Ҫакна шута илсе, ӑратлӑ аҫа выљӑхсемпе тӗрӗс усӑ курни кирлӗ.

Коротков йулташ тата ҫуракине хатӗрленес ӗҫ ҫинчен чылай чарӑнса тӑчӗ.

Майоров.

Ӑмӑртса ӗҫлекен бригадӑсем

Шурккари „Победа“ колхозӑн (Шупашкар р.) вӑрманта, чукунҫул строителствинчӗ тата вырӑнти ҫулйере йусас ҫӗрте йатарласа уйӑрнӑ бригадӑсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем пурте пӗр-пӗринпе ӑмӑртаҫҫӗ. Ӑмӑртса ӗҫлени ӗҫре паха тӗслӗхсем парать. Акӑ, вӑрман хатӗрлев йенӗпе ӗҫлекен Иван Федоров бригадин план тӑрӑх ҫак кварталта 870 кубла метр вутӑ турттармала пулнӑ, вӑл 940 кубла метр турттарнӑ. Чукунҫул строителствинче ӗҫлекен Иван Жирнов йулташ бригади те плана 120 процент тултарчӗ. Ку бригадӑ халӗ те чукунҫул строителствинчех ӗҫлет.

Вырӑнти ҫулйере йусас тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадӑ та (бригадирӗ Никитин) ытти бригадӑсенчен йулмасть. Пайанхи куна бригадӑ кирлӗ материалсене хатӗрлесе ҫитернӗ. Тата 70 кубла метр вӑрман касса турттарнӑ.

П. Трифонов.

Чи лайӑх ҫынсене суйлама хатӗрленетпӗр

Инвалидсен Шупашкарти „Хӗрлӗ мӑлатук“ производствӑлӑ ертелӗнчи рабочисемпе работницӑсем ССР Союзӗн Верховнӑй Советне суйланӑ чухне пурте пӗр ҫын пек пулса суйлава хутшӑннӑ. 1937 ҫулхи декабӗрӗн 12-мӗшӗнче суйлав урнисем патне пырса Ленин—Сталин партийӗн, рабочисемпе хресченсен телейлӗ пурнӑҫӗшӗн тӑрӑшакан чи лайӑх ҫынсемшӗн сасӑланӑ.

Халӗ те кунта РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсене лайӑх хатӗрленеҫҫӗ. Ертелре РСФСР тата ЧАССР Конституцисемпе суйлав саккунӗсене вӗренме йатарласах кружок организациленӗ. Кружока йалхуҫалӑхӗн коммунисла аслӑ шкулӗнче вӗренекенсем Илйинпа Музыкантов йулташсем йертсе пыраҫҫӗ. Заљатисем 3 кунта пӗрре пулаҫҫӗ. Халӗ 3 заљати пулса иртрӗ. Малтанхи заљатинче капиталисӑмла государствӑсенчи ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗпе ССР Союзӗнчи ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ ҫинчен вӗренчӗҫ. 2-мӗш заљатинче 1937 ҫулхи декабӗрӗн 11-мӗшӗнче Сталин йулташ Мускаври Сталинский суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем умӗнче каланӑ сӑмаха вӗренчӗҫ, 3-мӗш заљатинче „РСФСР Верховнӑй Советне суйламали Положенине“ вӗренме пуҫларӗҫ.

Ертел членӗсенчен чылайӗшӗ суйлав саккунӗсемпе Конституцисене лайӑх вӗренес тесе РСФСР тата Чӑваш АССР Конституци кӗнекисемпе РСФСР, Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисен кӗнекисене илнӗ.

В. Василйев.

Йулса пыракан район

ШӐХАСАН. Ҫак кунсенче йалсовет председателӗсемпе секретарсен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ.

Канашлу ҫакна кӑтартса пачӗ: Шӑхасан районӗ чылай ӗҫсене кирлӗ таран туса пыраймасть-ха. Район ҫуракине хатӗр мар. Мӗн пур акмали вӑрлӑхсенчен 93,66 процент ҫеҫ суртланӑ. Канашри Заготзерно складӗнчен „Диппе“ йатлӑ суртлӑ сӗлӗ вӑрлӑхне кӳрсе килессине пӗтӗмӗшпех пурнӑҫлайман. Вӑрлӑх улаштарас ӗҫре уйрӑмӑнах Мӑлти-Ӑнтавӑшри, Кибечри, Шурданри колхозсем йулса пыраҫҫӗ. Пӗтӗмӗшпе илсен, районри 67 колхозран 40—45 колхозра кӑна вӑрлӑхсене 100 проценчӗпех улӑштарса, суртласа хунӑ.

Плугсемпе сейалкӑсене ку таранччен те йусаса пӗтермен. Ытти кирлӗ инвентарсене, лаша хатӗрӗсене чылай колхозсенче йусама тытӑнманпа пӗрех, лашисене вӑйлӑ апат ҫине тӑратман.

Район 1-мӗш кварталта аш-какай хатӗрлес плана пурӗ те 45 процент ҫеҫ тултарнӑ. Йамаш, Матшӑ, Троицк, Шуркасси йалсовечӗсем хӑйсен ҫулталӑкри планӗсене пурӗ те 8-шер процент анчах тултарнӑ. Районӗпе илсен, аш-какай тӑратас ӗҫе 200 хуҫалӑх вуҫех те хутшӑнман. Вӗсенчен чылайӑшӗ 1937 ҫулхи обйазателствӑсене те пурнӑҫламан.

Укҫа-тенкӗ пухассипе Ухман, Шӑхаљ, Троицк, Ӑнтавӑш йалсовечӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ.

Канашлура парти райком секретарӗ Федоров, райӗҫтӑвком председателӗ Филиппов йулташсем йалсоветсен ӗҫӗсене тишкерсе сӑмах туҫа каларӗҫ. Вӗсем йалсовечӗсене ӗҫре кирлӗ пулакан кӑтартусем пачӗҫ. Ҫавӑн хыҫҫӑн йалсовет председателесем пурте ӗҫре кирлӗ таран улшӑну тума, РСФСР-па ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсене тивӗҫлипе хатӗрленсе кӗтсе илме, Шӑхасан районне пур ӗҫсем йенӗпе те мала кӑларма обйазателствӑсем илчӗҫ.

В. Чернов.

Ҫураки умӗн

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Воронӗж облаҫӗнчи Воробйовкӑ тӗштыр совхозӗн токарӗ стахановецӗ М. П. Колесников „ЧТЗ“ трактор моторӗн тӗнӗлне тӗрӗслет. Вӑл тракторсене йусас ӗҫре плана 200 процент тултарса ӗҫлет.

Н. Миргородский фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Тимлӗн ӗҫлемен йалсовечӗ

Турхан. Липовка йалсовечӗ государствӑ умӗнчи парӑмсене вӑхӑтра парса татассипе кайа йулса пырать. Пайанхи куна та ку йалсоветӗнчи уйрӑм хуҫалӑхсем иртнӗ ҫулшӑн аш-какай парса татман. Сӗт-ҫу парас плана 48 процент тултарнипех лӑпланса ларнӑ.

Ҫавӑн пекех, укҫа-тенкӗ те йапӑх пухаҫҫӗ. Займ—32 процент, самообложени—62 процент кӑна пухнӑ.

Йалсовет председателӗ Благовидов йулташ йӗркелӗ ӗҫлемест. Тепӗр чухне йалсовет канцељаринче ернере те 2 хут ҫеҫ пулать.

Йалсовет колхозсенче ҫуракине хатӗрленес ӗҫе йертсе пымасть. „Липовка“, „Ульяновка“, „Путь Ленина“, „Гудок“ колхозсем вихӑш йенӗпе те ҫуракине хатӗрленсе ҫитмен. Вӑрлӑхсене суртламан, ӗҫре кирлӗ машинӑ-плугӑсене йусаман.

Тислӗк, торф тата ытти минераллӑ ҫӑнӑхсене йалсовет председателӗ кӳрсе килесшӗн мар: „Епӗр торфсӑр та пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илетпӗр“, тет вӑл.

И. Архипов.
А. Покровский.

Тата та лайӑхрах ӗҫлеме пулатӑп

Епӗ Ҫӗмӗрле комбинатне 1931 ҫулта ӗҫлеме кӗтӗм. Кунта килсенех мана хӑма ҫуракан цехра торцовальнӑй станок ҫинче ӗҫлеме тӑратрӗҫ. Унта епӗ 1934 ҫулччен ӗҫлерӗм.

Малтанхи вӑхӑтра ӗҫлеме чӑнах та йаварччӗ. Анчах, техникӑна вӗренсе пынӑ май, епӗ хамӑн нормӑна 170—200 процент тултарма пуҫларӑм. Ҫав вӑхӑтрах мана общественлӑ ӗҫсене те хутшӑнтарчӗҫ,—профсойуз оргӑнӗсен членӗ пулса чылай вӑхӑт хушши ӗҫлерӗм. Халӗ епӗ хула совечӗн членӗ, халӑх сучӗн заседателӗ, рабочисен кооперативӗн ревизи комиссийӗн членӗ пулса ӗҫлетӗп.

Пирӗн социалисӑмлӑ ҫӗршывра хӗрарӑмсем арҫынсемпе пӗр тан. Вӗсем нимӗнле ӗҫре те арҫынсенчен кайа йулмаҫҫӗ.

1936 ҫулта епӗ стољарнӑй цеха куҫрӑм. Кунта та епӗ хамӑн тивӗҫе ҫухатмарӑм, стахановецсен ретне тӑтӑм. Иртнӗ ҫулхи декабӗрӗн 10-мӗшӗнче нормӑна 316 процент тултарса пысӑк ҫитӗнӳ турӑм. Кун хыҫҫӑн манӑн ӗҫлес кӑмӑлӑм татах та хӑпарчӗ. ССРС Верховнӑй Советне суйланӑ хыҫҫӑн хамӑр комбинатра иртернӗ стахановла вунӑкунлӑхра плана 418 процент тултартӑм. Кӑҫалхи йанварӗн 11-мӗшӗнче тепӗр ҫӗнӗ рекорд турӑм, нормӑна 480 процент тултартӑм.

Мӗнле турӑм-ха епӗ ҫав ҫитӗнӳсене? Епӗ кашни кунах ӗҫе маларах пырса станока тасататӑп, ҫу сӗретӗп, пӑчкӑна улӑштарса лартатӑп. Ун хыҫҫӑн материал хатӗрлетӗп, тийенӗ платформӑсене йӗркене лартатӑп. Мӗнле материал мӗн чухлине ӗҫ пуҫланаччен шута илетӗп. Шаблонсене те малтанах хатӗрлетӗп. Ҫаксене хатӗрленӗ хыҫҫӑн тин епӗ ӗҫе тытӑнатӑп. Ӗҫ вӑхӑтне сайа йамастӑп, 420 минутпа пӗтӗмпех усӑ куратӑп. Ҫапла ӗҫлени ӗнтӗ мана ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартма пулӑшать.

1938 ҫулта стахановла ӗҫлесе, хамӑн ҫулталӑкри ӗҫ планне Октабӗр уйавӗ тӗлне ытлашшипех тултарма пулатӑп.

Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи стољарнӑй цехра ӗҫлекен стахановка Вера Каҫйанова.

Срукчен тултарассишӗн

ИШЛЕЙ. Мӑналти чӑпта ҫапакан промысла ертелӗ хӑйне панӑ плана ытлашшипех тултарса пырать. Ертелӗн икӗ уйӑх хушшинче 48.600 чӑпта ҫапмала пулнӑ пулсан, вӑл мартӑн 1-мӗшне 58.370 чӑпта ҫапса кӑларса плана 168 процент тултарнӑ.

Чӑпта ҫапас ӗҫре станановецсен йышӗ ӳссех пырать. Ф. Йегоров, А. Пушкина, С. Йенчиков, А. Николайева т. ыт. йулташсем кашни уйӑхрах чӑпта ҫапас плана 150 процентшар тултарса пыраҫҫӗ.

Ертел членӗсем халӗ пӗрремӗш квартал планне срукчен тата ытлашшипех тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Кашни член ку тӗлӗшпе хӑй ҫине татӑклӑ обйазателствӑ илнӗ.

Гер. Щербаков.

Колхоза кӗреҫҫӗ

КӲКӖҪ. Ҫуракине хатӗрленнӗ май Паникасси йалсоветӗнче „Морйак“ колхоза 5 хуҫалӑх, Шемшер йалсоветӗнчи „Ҫӑлту“ колхоза 2 хуҫалӑх кӗчӗҫ. Ҫӗнӗ колхозниксем ҫуракине хатӗрленес ӗҫре тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

И. Василйев.

Орфографи ыйтӑвӗсене сӳтсе-йавнӑ май

Чӑваш орфографи ыйтӑвӗсене сӳтсе-йавнӑ май, „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫат редакцийӗ мартӑн 22-мӗшӗнче канашлу туса ирттерчӗ. Канашлура писателсем, журналиссем, кӗнеке кӑларас ӗҫре ӗҫлекенсем, шкулсенче чӑваш чӗлхине вӗрентекенсем пулчӗҫ.

Канашлу Куљтурӑн ӑслӑлӑхпа тӗпчев институчӗ ҫырса хатӗрленӗ „Чӑваш орфографин тӗп правилисен пройектне“ сӳтсе-йаврӗ.

Пройект пирки канашлура Н. Семенов, Н. Ваҫанка, Арк. Ӗҫхӗл, Афанасйев—Чулкаҫ, Степанов (Чӑвашгиз) Уйап Мишши, Горский тата ытти йулташсем тухса каларӗҫ.

Тухса калакансем Куљтурӑн ӑслӑлӑхпа тӗпчев институчӗ чӑваш орфографине ҫӗнетес ыйтусем ҫине ҫийелтен пӑхнине, орфографи правилисен пройектне чӑваш чӗлхин саккунӗсене тӗплӗн тӗпчесе пӑхмасӑр ҫырнине палӑртрӗҫ. Пройектра пурнӑҫпа ҫыхӑнман тавлашулӑ ыйтусем питех те нумай.

Пройекта ҫыракансен пӗрремӗш сӗнӗвӗ — вӑл чӑваш алфавитне Щ, Ъ, Ь, Э, Ю, Я саспаллисене кӗртесси ҫинчен. Вӗсем, ку саспаллисем, чӑваш чӗлхине вырӑс йе ытти чӗлхесенчен кӗнӗ сӑмахсене ҫырма кирлӗ, теҫҫӗ. Вӗсем ку сӗнӗве, 1933 ҫулта чӑваш алфавитне б, г, д, ж, з, ц, саспаллисем кӗртнипе танлаштараҫҫӗ.

Анчах кунта кӑшт тӗпчесе пӑхни кирлӗ. Пирӗн чӗлхене бригадир, колхоз, социалисӑм, Жданов сӑмахсемпе пӗрле хыттӑн йанӑраса илтӗнекен б, г, д, ж, з, ц сасӑсем кӗчӗҫ. 1933 ҫулчченхи алфавитра пирӗн ҫак хыттӑн йанӑраса илтӗнекен сасӑсене пӗлтерекен саспаллисем ҫукчӗ, вӗсене ҫемҫетсе ҫырнипе сӑмахсен йанӑравӗ пӑсӑлатчӗ. Ҫавӑнпа хыттӑн йанӑраса илтӗнекен саспаллисене кӗртни чӑваш чӗлхишӗн питех те пысӑк утӑм пулса тӑчӗ. Вӑл кирлӗ, пурнӑҫ ыйтнӑ йапала пулса тухрӗ.

Мӗнле пулӑшу пама пултарать чӑваш чӗлхине Щ, Ъ, Ь, Э, Ю, Я саспаллисене кӗртни. Пирӗн чӗлхере вӑл сасӑсене пӗлтерекен саспаллисем пур. Щ сасӑна епӗр ШЧ саспаллисемпе, Э сасӑна— Е саспаллипе, Ю сасӑна—ЙУ, Я сасӑна ЙА саспаллисемпе аванах ҫыратпӑр. Э, Ю, Я саспаллисене латин, француз тата ытти чӗлхесенче те Е, iu, ia саспаллисемпе палӑртаҫҫӗ.

Тата ҫакна каламала, пӗр чӗлхен икӗ тӗрлӗ саккун пулма пултараймасть. Пӗр пек илтӗнекен сасӑсене пӗр чӗлхерех пӗринче—пӗр тӗрлӗ, тепринче тепӗр тӗрлӗ саспаллисемпе ҫырни саккунсӑр йапала. Пӗринче—Якобинец, тепринче—Йакку; Пӗринче—каюта, тепринче—кайу. Пӗр чӗлхен ҫырулӑхӗнче епӗр ку—чӑваш, ку вырӑс сӑмахӗ тесе уйӑрса тӑмастпӑр. Каламала, вырӑс йе ытти халӑх сӑмахӗсем чӑваш чӗлхине кӗрсен, вӗсем урӑх чӗлхе сӑмахӗсем пулма пӑрахаҫҫӗ, вӗсем чӑваш чӗлхин харпӑрлӑхӗ, пуйанлӑхӗ, урӑхла каласан чӑваш сӑмахӗсем пулса тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсене чӑваш чӗлхин правилисене пӑхӑнтарса ҫырмала. Урӑхла пулма та пултараймасть. Етем сӑмахра Э сасӑ илтӗнет, эпохӑ сӑмахра та Э—илтӗнет, кунта сасӑсем хушшинче нимӗнле уйрӑмлӑх та ҫук, анчах Резуков йулташ пройекчӗ тӑрӑх, пӗр ҫӗрте Е саспаллипе ҫырмала, тепӗр ҫӗрте Э—паллӑпа. Мӗншӗн капла? Мӗншӗн пӗр пек илтӗнекен сасӑсенех ик тӗрлӗ паллӑпа ҫырмала? Вырӑс ҫырулӑхӗнче ӗлекхи вӑхӑтра йать-йе пурччӗ. Ӑҫта йать-йе, ӑҫта халь Е ҫырмалине ӑсра пӗлсе тӑмала пулнӑ, унсӑрӑн хут пӗлекен ҫын пулма май килмен.

Ҫӳлте асӑннӑ пек ҫитменлӗхсем пройектра тата та нумай. Вӗсем ҫинче канашлура тухса калакансем тӗплӗн чарӑнса тӑчӗҫ. Сӑмахран, пройектра чӑваш чӗлхинчи пусӑм (ударени) саккунӗсем ҫинчен нимӗн те каламан. Ку—пысӑк ыйту. Россия, Англия, Колония йышши сӑмахсемпе комсомолец, партиец, испанец йышши сӑмахсене вӗҫлес тӗлӗшпе те патраштарусем нумай.

Канашлу Куљтурӑн ӑслӑлӑхпа тӗпчев институтне орфографи пройектне, ӑна ҫирӗплетме тӑратиччен малтан, халӑх хушшине—учителсем, студентсем, вӗренекенсем хушшине тухса, тӗплӗнрех сӳтсе-йавма сӗнчӗ.

Учителсен политвӗренӳвӗ

ТРАК. Вӗренӳ ҫулӗ пуҫлансанах вӑтам шкулти учителсем парти историне вӗренмели кружок организацилерӗҫ. Вӗренекенсем хӑйсем хушшинче социалисӑмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса йанӑ.

Кружок Именкассинчи вӑтам шкулти кружокпа ӑмӑртса ӗҫлет. П. Аљбатрос, А. Гурйев, М. Павлов, Григорйев йулташсем отлично вӗренеҫҫӗ. Анчах, ҫав хушӑрах, Е. Степанова, Г. Сергейев, А. Алешева йулташсем начар ӗлкерсе пыраҫҫӗ.

Ал. С-в.

Ӑна пурте йуратаҫҫӗ

Октабӗрти Аслӑ Социалисӑмла Револљуци Совет Сойузӗнчи пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ валљи телейлӗ пурнӑҫ ҫулне уҫса пачӗ. Халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ йертсе пынипе ӗҫхалӑхӗ чӑн-чӑн телейлӗ пурнӑҫ турӗ. Ӗлӗк, патша чухне, ирӗксӗрех помещиксемпе кулаксен мӑшкӑлне тӳссе пурӑннӑ ҫынсем, ҫӗршывӑн хуҫисем, ҫӗршыври чаплӑ ҫынсем пулса тӑчӗҫ.

Акӑ, Пушнарти (Йетӗрне районӗ) „Мичурин“ колхозри колхозницӑ Йевдокийа Соловйова. Вӑл револљуци пуличченхи вӑхӑтра Пушнарти Михайлов, Стољаров, Белов кулаксем патӗнче кунне-ҫӗрне пӑхмасӑр ӗҫленӗ. Ҫапах тӑраниччен ҫиме ҫӑкри пулман, ҫийе тӑхӑнма тумтирӗ пулман.

Халь Соловйова йулташӑн авторитечӗ пысӑк. Кам пӗлмест ӑна халь колхозра! Ӑна пурте йуратаҫҫӗ, мухтаҫҫӗ.

— Пирӗн колхозри ӗҫ паттӑрӗ, ӗҫ организаторӗ!—теҫҫӗ ун ҫинчен „Мичурин“ колхоз колхозникӗсем.

1935 ҫулта Соловйова йулташ крайри колхозник-ударниксен II-мӗш сйезӗнче пулнӑ. Унтан тавӑрӑнсан колхозниксем хушшинче вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӗве анлӑн сарса йанӑ.

Хальхи вӑхӑтра Соловйова йулташ йалсовет членӗ тата колхоз правлени членӗ. Йалсовет членӗнче вӑл тӑваттӑмӗш ҫул тӑрать. Обшественлӑ ӗҫре активлӑ ӗҫлет. Пур ҫӗре те ҫитет, пур ӗҫре те ӗлкӗрет.

Соловйова йулташ ССР Сойузӗн Верховнӑй Советне суйланӑ вӑхӑтра та тӑрӑшса ӗҫлерӗ. Вӑл Национальнӑҫсен Советне суйламали Йетӗрне округӗнчи суйлав комиссийӗн членӗ пулнӑ. Унта вӑл активлӑ хутшӑнса ӗҫлерӗ, агитаци ӗҫне анлӑн туса пычӗ.

Ник. Цветков.

А. М. Горький ҫуралнӑ ҫӗршывра

Горький хулинчи Ленин йачӗпе тӑракан библиотекӑ уҫӑлнӑранпа ҫӗр ҫул ҫитет. Библиотекӑна асӑлатса вӑйлатас тата чаплантарас ӗҫре А. М. Горький хӑй тӳррӗмӗн хутшӑннӑ. Библиотекӑ архивӗнче аслӑ писател вырӑнти библиотекӑ фондне ҫӗнӗ кӗнекесемпе тултарассишӗн мӗнле тӑрӑшнине кӑтартакан интереслӗ документ сыхланса усраннӑ. Вулакансене паракан чылай кӗнекесем ҫинче „Максим Горький уйрӑмӗ“ текен штамп пур. Кусем—писател библиотекӑна тӗрлӗ вӑхӑтра халаласа панӑ кӗнекесем. Ун пек кӗнекесем мӗн пурӗ 800 шутланаҫҫӗ. Горькинче пурӑннӑ чухне вӑл кӗнекесемпе Алексей Максимович хӑй те справкӑсем валљи усӑ курнӑ.

* * *

Облаҫри Горький йачӗпе тӑракан литературӑ музейӗнче Алексей Максимович пурнӑҫӗпе творчествине кӑтартакан ҫӗршер експонатсене йуратса пухса пынӑ. Експонатсем хушшинче—Аљоша Пешков ҫурални ҫинчен ҫырнӑ метрикӑ кӗнеки, „Сокол ҫинчен хывнӑ йурӑсен“ сыпӑкӗн алҫырувӗ пур, Алексей Максимович йутҫӗршыв чӗлхипе куҫарса кӑларнӑ хӑйӗн кӗнекисене пӗрер екземпљар музейе хӑй халаласа панӑ.

* * *

Горький пйессисем Горькири драмӑ театрӗн репертуарӗнче хисеплӗ вырӑн йышӑнаҫҫӗ. „Мещане“ йатлӑ пйесӑ вуннӑр ҫул ӗнтӗ репертуартан тухмасть. Ҫавнашкалах „На дне“, „Последние“, „Дети Солнца“, „Егор Булычев“ т. ыт. пйессӑсене те лартаҫҫӗ. Горький ҫурални 70 ҫул тултарнӑ кун театр унан „Зыковы“ йатлӑ пйессине лартса парать.

* * *

Горький хулинче пролетарин аслӑ писателӗн памйатникне лартма йышӑннӑ. Памйатнике Ока йуханшывӗ хӗррине ҫӳлӗ сӑрт ҫине лартаҫҫӗ. Памйатник Атӑлтан, Окаран, Канавињоран (халӗ Сталинский район) тата хуларан инҫетренех курӑнакан пулать. Памйатник патӗнчен йуханшыв патне анма гранитлӑ сарлака пусма тума шутлаҫҫӗ.

(ТАСС).

парасси, вӑрлӑх хатӗрлесси, ҫум ҫумласси, ҫурлапа тырӑ вырасси, кӗрхи ҫӗртме тӑвасси тата ытти ӗҫсем те. Ҫак ӗҫсене тума 4 ҫынтан пуҫласа 8 ҫынна ҫити йатарласа звеносем тумала. Пысӑк, 25—30 ҫынлӑ звеносем тума йурамасть, вӑл ӗҫкунӗпе туллин усӑ курма, сделшчинӑ ӗҫне сарса пыма кансӗрлет.

III. Нормировани тата ӗҫшӗн тӳлесси

Ҫак вӑхӑта ҫитичченех нумай колхозсем ҫӗрӗҫ оргӑнӗсем хатӗрленӗ примерлӑ ӗҫ нормисемпе вырӑнти условисене май кирлӗ пек улшӑнусем кӗртмесӗр, ҫаплипех усӑ курса ӗҫлерӗҫ. Ҫакӑ вӑл колхозсене тӗрӗс нормӑсем тӑрӑх ӗҫлесе пыма май памасть.

Машинӑсемпе туллинтерех усӑ курас, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырас шутпа колхозсене машинӑпа ӗҫленӗ чухне прогрессивлӑ сделшчинӑпа усӑ курма сӗнмеле. Ҫурак и ӗҫӗсенчен пуҫласа прогрессивлӑ сделшчинӑпа ӗҫлеме тытӑнмала. Ҫак йенӗпе ҫакӑн пек ӗҫсен примерлӑ нормине сӗнетпӗр:

1) Икӗ касалӑ плугпа сухаласси: нормӑна тултарнӑшӑн 1,5 ӗҫкунӗ шутласа памала. Нормӑран ирттерсе 0,10 гектар ытларах сухаланӑшӑн ӗҫкунӗ сумне ахаль сделшчинӑ тӑрӑх 0,10 ӗҫкунӗ, плана ирттерсе 0,20 гектар ытларах сухаланӑшӑн 0,25 ӗҫкунӗ хушса памала.

Планран ирттерсе	0,30	гектар	сухаланӑшӑн	0,45 ӗҫкунӗ
—„—	0,40	—„—	—„—	0,70 —„—
—„—	0,50	—„—	—„—	1 ӗҫкунӗ.

2) 13 ретлӗ сейалкӑпа акасси: нормӑна тултарнӑшӑн ахаль сделшчинӑ тӑрӑх 1,75 ӗҫкунӗ шутласа памала.

Нормӑна ирттерсе	0,5	гектар	ытларах акнӑшӑн	0,10 ӗҫкунӗ
—„—	1,0	—„—	—„—	0,25 —„—
—„—	1,5	—„—	—„—	0,45 —„—
—„—	2,0	—„—	—„—	0,70 —„—
—„—	2,5	—„—	—„—	1 ӗҫкунӗ
—„—	3,0	—„—	—„—	1,35 ӗҫкунӗ.

Прогрессивлӑ сделшчинӑ ӗҫ тухӑҫне хӑпартма пысӑк майсем парать пулин те, унпа пур ӗҫсенче те усӑ курсан учот ӗҫне пӑтраштарма пултарать.

Ҫавӑнпа та прогрессивлӑ сделшчинӑ йӗркине ӗҫе кӗртме тытӑнассине пит тӗплӗн шухӑшласа тумала. Прогрессивлӑ сделшчинӑ ыйтӑвне татса панӑ чухне пур тӗрлӗ ӗҫсем валљи тата пур колхозсем валљи пӗр пек сӗнӳ пулма пултараймасть. Ку ыйтӑва кашни колхоз хӑйӗн ӗҫ условийӗсемпе конкретлӑ задачӑсене шута илсе татса памала.

Пирӗн республикӑри нумай колхозсенче йертсе пыракан кадрсен ӗҫӗсене тӗрӗс мар шутласа хак параҫҫӗ, ҫавна пула епӗр час-часах колхоз руководстви саккунсӑр улшӑнса тӑнине, йе ӗҫкунӗсене ытлашши расхутласа пӗтернине куратпӑр.

Колхозсенчи йертсе пыракан кадрсем валљи ӗҫкунӗ панӑ чух ҫакӑн пек йӗрке сӗнме пулать.

Правлени председателне колхоз пысӑкӑшне тата ӗҫ йаваррине кура: 50 хуҫалӑха ҫитиччен 5-мӗш группӑпа, 50 хуҫалӑхран 200 хуҫалӑха ҫитиччен 6-мӗш группӑпа, 200 хуҫалӑхран ытла пулсан 7-мӗш группӑпа йе 2 ӗҫкунӗ шутласа памала.

Уйхир бригадисен бригадирӗсене —пӗрремӗш ҫул ӗҫлет пулсан 4-мӗш группӑпа, пӗр ҫулталӑк хушши ытларах ӗҫлет пулсан 5-мӗш группӑпа шутласа памала.

Сад ӗрчетекен тата пахча-ҫимӗҫ бригадисен бригадирӗсене, мӗн чухлӗ ӗҫленине тата бригадӑ пысӑккӑшне кура, малтанхи ҫулшӑн (бригадӑра 10 ҫынтан пуҫласа 15 ҫынна ҫитиччен пулсан) 3-мӗш группӑпа, пӗр ҫулталӑк ытларах ӗҫлет пулсан 4-мӗш группӑпа шутласа памала.

Колхоз счетоводне (пӗр колхозра вӑл миҫе ҫул ӗҫленине кура) малтанхи ҫулшӑн уйӑхне 24 ӗҫкунӗ, пӗр ҫулталӑк ытларах ӗҫлесен—36 ӗҫкунӗ.

Бухгалтӗре (бухгалтӗр ӗҫне пӗлни тӑрӑх тата мӗн чухлӗ ӗҫленине кура) малтанхи ҫул ӗҫлекене уйӑхне 36-шер ӗҫкунӗ, ытларах ӗҫлекене 42-шер ӗҫкунӗ.

Колхоз кладовщикне (50 хуҫалӑха ҫитиччен) 3-мӗш группӑпа, ытларах пулсан 4-мӗш группӑпа

Колхозсенчи выљӑх-чӗрлӗх фермисен заведуйушчисене (мӗн чухлӗ ӗҫленине, фермӑ пысӑккӑшне тата выљӑхсен продукцине кура), пӗрремӗш ҫул ӗҫлет пулсан 4-мӗш группӑпа, пӗр ҫулталӑк ытларах ӗҫлет пулсан 5-мӗш группӑпа.

Пӳрт-лабараторисен тата ача йаҫлисемпе плошчадкисен заведуйушчийӗсене, ӗҫ пысӑкӗшне кура 3-мӗш йе 4-мӗш группӑпа.

Йалхуҫалӑх ертелӗн уставӗ тӑрӑх, ӗҫкунӗсене шутламали йӗркене колхозниксен аслӑ пухувӗ йышӑнса ҫирӗплетет. Колхозсенчи йертсе пыракан кадрсене, ытти колхозниксене пекех вӗсен ӗҫ пысӑкӑшӗпе пахалӑхне кура, йалхуҫалӑх ҫулӗ пӗтнӗ хыҫҫӑн тупӑшсене валеҫнӗ чухне, уставра кӑтартнӑ пек, ӗҫкунӗ хушса йе чакарса памала.

Китайри вăрçă

Таьцзин—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинче пысăк çапăçусем пулса пыраççĕ. Мартăн 21-мĕшĕнче фронт линийĕ çурçĕрти Цзйаçанрай пуçласа кăнтăрти Йçапа çитиччен Аслă канал тăрăх пулнă.

Йапонецсен шалтр тылĕнче Китай партизанĕсем Ишуй йатлă хулана туртса илнĕ (Шаьдун провинцийĕ).

Китайран пĕлтернĕ тăрăх. Шаьси провинцинче Китай çарĕсем Хуанхе йуханшывĕн пĕтĕм çыранĕсем тăрăх сарлака фронтпа контрнаступлени туса пыраççĕ. Йапонецсем çурçĕр-хĕвелтухăç йенне чакса пыраççĕ. Шаьси провинципе чиккĕленсе тăракан Шеньси провинцине Папони çарĕсем тапăнса кĕрес кайăс хăрушлăх иртсе кайнă.

Китай çарĕсен кавалери чăсĕсем Шаьси провинции çурçĕр пайĕнчен Суйуаь провинцин кăнтăр йенне рейд туса шалала кĕрсе кайнă та Суйуаьри пысăк суту-илÿ хулине—Токето хулине йышăннă.

Вăтам Китайри Таьцзин—ПУкоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче Китай çарĕсем Хуайхе йуханшыв çурçĕр çыранĕсене Йапони отрйачĕсенчен тасатса, йуханшывăн кăнтăр çыранĕсенче çапăçма тытăннă.

Мартăн 19-мĕшĕнче Китай самоьочĕсем Ухуран çÿлерех, Йанцзы йуханшывĕ çинчи Йапони карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă. (ТАСС).

Йапони авиацийĕ Китайăн историлĕ памйатникĕсене çĕмĕрет

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай музейĕ ун çине бомбă пăрахнă хыççăн.

(Прессклише).

Англири фашисла агреççине хирĕçле йухăм

Мартăн 21-мĕшĕнче Лондонра, Англи компартийĕ пуçарнипе, фашисла Италипе Германи интервенцине хирĕç кĕрешекен Испани халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартса, демонстраци пулса иртнĕ. Унта 20 пин çын хутшăннă. Демонстраци Барçелонă çине тата Испани республикĕн ытти хулисем çине бомбăсем пăрахса варварла çĕмĕрнĕшĕн хыттăн тарăхнине кăтартса панă.

Демонстрацире пулнисем Англин хальхи правителствине отставкăна тухма, унăн вырăнне Франципе тата Совет Сойузĕпе пĕрле Испани халăхне тата демократилĕ ытти государствăсене агреççине хирĕç кĕрешнĕ çĕрте вĕсене пулăшма пултаракан правителствă тума ыйтаççĕ.

Çав кунах тепĕр демонстраци пулса иртнĕ, ăна Испанири пăлхавçăсен парохочĕсем çине вăрçă материалĕсене тийеме чарăннă рабочи-грузчиксемпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартса организациленĕ.

Германи фашисăмĕн агенчĕсем Бразилире

ЊЙУ-ЙОРК, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). „Њйу-Йорк таймс" хаçатăн Рио-де-Жанейро хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, полици хаьте „интегралиссен" (Бразили фашисĕсен) пуçлăхне Саьгадона тата унăн пилĕк помошникне шырать.

Икĕ ерне кайала,—тесе çырать малала корреспондент,— полици Германи фашисăмĕн пĕр агентне арĕсленĕ. Çав агент: „Бразилире пурăнакан нимĕççен Гитлер хушнисене пăхăнса тăмала, тесе Германи фашисăмĕн идейисене сарнă". (Пурте пĕлеççĕ, Бразили правителстви Германи пропагандине сарма чарать пулсан, Германи дипломатилĕ çыхăнува татассипе хăратнă).

Ассошиейтед Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Бразили полицийĕ „интегралиссен" çурчĕсене çемĕрен пырса ухтарнă хыççăн хĕçпăшал нумай тупнă, вăл шутрах Германире туса кăларнă револьверсемпе кинжалсем те пур.

Литвинов йулташ сĕнÿне Англи правителствинче пăхса тухаççĕ

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: общинăсен палатинче Артур Гендерсон Чемберлена çакăн пек ыйту панă: Германи Австрине туртса илнĕ май килсе тухнă лару-тăрува сÿтсе-йавма державăсен конференцине пухасси çинчен Литвинов панă сĕнÿ çине Англи правителстви мĕнле пăхнине вăл пĕлтерĕши,—тенĕ. Чемберлен: Литвинов сĕнсе каланине пăхса тухаççĕ,—тесе ответленĕ.

К Ĕ С К Е Н

■■ Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи представителсен палати тинĕс строителствине 1.121 мĕлйун доллар укçа хывма палăртнă програмăна ырланă. Программăра виçĕ линкор, икĕ авианосец, тăхăр крейсер, 23 есминец, шыв айĕнчен çÿрекен 9 кимĕ, 22 пулăшакан суднă, çавăн пекех тата 950 самольот тума палăртнă.

■■ Данин хĕвеланăçри çыранĕнче Германи парохочĕ сиксе çурăлса кайса шыва путнă. Пароходпа Испани пăлхавçисем валььи снарйадсемпе патронсем тийесе пынă пулнă.

■■ Германи фашисĕсем Австри çарĕнчи чăссенчен 231 офицера „тасатнă", вăл шутрах фельдмаршал Цинер, çавăн пекех тата 10 генерал пур. Нумай офицерсене „пенçи" çине куçарнă.

■■ Бреславльре (Германи) социал-демократ пулнă 22 çынна суд тума пуçланă. Вĕсене Чехословакире пурăнакан Германи емигранчĕсемпе çыхăну тытнă, тесе айăплаççĕ.

■■ Профессор Пикар (Бельги) океанри пысăк тарăнĕшсене батисферăпа тĕпчесе сăнамали план туса хатĕрленĕ (батисферă—океан тĕпне анма йатарласа тунă кабинă). Пикар биологпа пĕрле 5 километр тарăнĕш анса аслăлăхлă сăнавсем тума шутлать.

■■ Осло хулинче (Норвеги) апрелĕн 5-мĕшĕнче çурçĕрти çĕршывсенчи (Норвеги, Дани, Швеци тата Финьланди) йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцийĕ пухăнать. Конференцире йулашки событисем хыççăн Йевропăра пулса тăнă лару-тăру çинчен тата çурçĕрти çĕршывсем Лигă наци çине мĕнле пăхни çинчен сÿтсе-йаваççĕ.

■■ Испанири пăлхавçăсем Вальйадолидри (Испани çурçĕр пайĕнчи хула) университета хупса, ăна казарма туса хунă. Вольйадолидри университета 1346 çулта тунă пулнă.

■■ Тăван çĕршыва сутакансемпе тата шпионаж тăвакансемпе кĕрешме йатарласа тунă трибунал Барçелонăра виçĕ шпиона вĕлермеле приговор йышăннă.

(ТАСС).

Кăнтăр Казахстанра йур çунă, çанталăк сивĕ тăрать

ЧИКМЕНТ, мартăн 21-мĕш. (ТАСС). Кăнтăр Казахстан районĕсенче мартăн 19-мĕшпе 20-мĕшĕнче çăмăр çунă. Кзыл-Ордын облăçĕнче мартăн 20-мĕшĕнче йур çунă. Сывлăшри температурă 12 градус сивĕне çитнĕ. Çĕрле йур çума пуçланă. Чикментра йур хулăмĕшĕ 7 сантиметр. Сывлăшри температурă 0 градусран пуçласа 5 градус таран сивĕ. Пур çĕрте те пекех уйхир ĕçĕсене пăрахнă. Сăртсенче вăйлă çилтăвăлсем.

Испанири фронтсенче

Испанин оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра мартăн 21-мĕшĕнче республикă çарĕсен позицийĕсем улшăнман. Альканьизран кăнтăр йенчи районра республиканецсем пăлхавçăсен виçĕ вăйлă атакине сирсе пăрахнă. Республикă авиацийĕ çав районта пăлхавçăсен пĕр çĕре пухăннă çарĕсем çине ăнăçлăн бомбăсем пăрахнă.

Мартăн 21-мĕшĕнче ирхине республикă çарĕсен отрйачĕ Мадридран çурçĕрпе хĕвеланăçнели районра пăлхавçăсен темиçе позицийĕсене те йышăнса илнĕ. Пăлхавçăсен артиллерийĕ Мадрид çине пенĕ. Хулана чылайах сийен кÿнĕ.

Ытти фронтсенче—улшăну çук. (ТАСС).

„Ман хыççăн!"

(Испанири кĕрешÿсенче пулнă ĕç)

Сĕм тĕттĕм каç. Куеста де ла Рейна çывăхĕнчи Харамă çинче хĕрÿ çапăçу пырать. 125 çынна тыткăна илсе тыла ăсатнă та ĕнтĕ. Вĕсем çине пăхма та хăрушă—пичĕсем тĕтĕмпе тата тусанпа хуралса пĕтнĕ. Çапăçура халран кайнă. Республикă боецĕсем урса кайнă пек çапăçаççĕ, малала та малалах куçса пыраççĕ.

Антонио Бланко лейтенант малала куçса кайнă республикă çарĕсемпе çыхăну майлаштарнă. Вăл телефон пралукне каракан салтаксен ушкăнне йертсе пынă. Çапăçу вырăнĕ пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса тăнă. Ункăпа çавăрса илнĕ фашиссем, хĕссе пырассине сирес шутпа, республиканецăсем çине тискер кайăксем пек сикесике ÿкнĕ..

Бланко хăйĕн салтакĕсене кайа хăварса, пралуксене аларан тытнипех малала пынă. Çавăнтах вăл темиçе çын мĕлкине тĕл пулнă та çапла ыйтнă:

— Есĕр 107-мĕшĕнчен-и?

— Çук. Чарăн! Есĕ-тыткăна лекрĕн. Вива Франко! тенĕ Бланкона хирĕç. Уйăх çутинче Бланко кăкри умĕнчех револьвер йăлтăртатнă. Бланко хытса тăнă. Унăн алăри пралукĕсем хăйсемех çĕре ÿкнĕ.

— „Ман хыççăн!"—командă панă фашис прапорщчик.

Бланко прапорщчик хыççăн утнă. Ун хыççăн штыксемпе тĕллесех икĕ фашис салтакĕ пынă Бланкона траншейăна илсе пынă. Çапăçу ку вăхăтра та чарăнман.

Прапорщчик Бланкона траншейăра чавса тунă шăтăка тĕртсе кĕртсе йанă. Алăка хурал тăратнă та хăварт хăйĕн взвочĕ патне кайнă.

— Есĕ „кам—рабочи и?—ыйтать Бланко хуралран.

— Çук, хресчен, Естремадуăран...

— Хресчен „ Намăс мар-и сана? Хăвăрăннисене хирĕç пыратăн...

— Мĕн тăвас манăн? Хушаççĕ...

— Есĕ манпа кайатăн,—татăклăн каланă Бланко.

— Ăçта?

— Пирĕннисем патне. Епĕ саншăн ответ тытатăп. Малала!

Бланко çĕр шăтăкĕнчен тухнă. Салтак—ун хыççăн. Хирĕç икĕ çалтак пыраççĕ.

— „Ман хыççăн!"—Командă панă Бланко.

Вĕсем траншейран тухнă та пĕшкĕнкелесе малала утнă. Çул çинче çаплах пăлхавçăсен салтакĕсем тĕл пулкаланă.

— „Ман хыççăн!"—хуллен каланă Бланко кашниччех.

Ир йенеле Бланко хăйĕн республикă çалтакĕсем тăнă вырăна çитнĕ. Вăл командă тунипе пĕрле пынисем пăлхавçăсен салтакĕсем 40 çын пулнă. (ТАСС).

ССР Сойузĕ 1937 çулта урăх çĕршывсемпе суту-илÿ туни

Таварсем кÿрсе килнинчен нумайрах сутнă

Таможьă тĕп управленийĕ ССР Сойузĕн 1937 çул хушшинчи тулти суту-илÿ итогĕсене тунă. 1937 çулта Совет Сойузĕн тулти суту-илÿвĕн пĕтĕм çаврăнăшĕ 3.069,9 мĕлйун тенкĕлĕх пулнă, урăхла каласан, 1936 çулхинчен 358,3 мĕлйун тенкĕлĕх ытларах.

Иртнĕ çулхи тулти суту-илÿ çаврăнăшĕн пĕтĕм сумминчен—урăх çĕршывсене тавар сутни 1.728,6 мĕлйун тенкĕлĕх тата тавар кÿрсе килни 1.341,3 мĕлйун тенкĕлĕх пулнă. Çапла вара, ССР Сойузĕ иртнĕ çулта урăх çĕршывсене таварсем,—унтан кÿрсе килнипе танлаштарсан, 387,3 мĕлйуң тенкĕлĕх нумайрах сутнă.

1937 çулта ССР Сойузĕнчен вăрман материалĕсене 436,4 мĕлйун тенкĕлĕх турттарса кайнă. Ку вăл—1936 çулхинчен 78 мĕлйун тенкĕ ытларах пулать. Иртнĕ çулта ССР Сойузĕнчен 257,6 мĕлйун тенкĕлĕх тырпул турттарса кайнă, 1936 çулхипе танлаштарсан вăл 221,7 мĕлйун тенкĕ ытларах пулать. Çĕр мамăкĕ—55,8 мĕлйун тенкĕлĕх (1936 çулта 3,3 мĕлйун тенкĕлĕх) турттарса кайнă. Автомобилсем, тракторсем тата вĕсен запаслă пайĕсене 25,6 мĕлйун тенкĕлĕх (1936 çулта 14,1 мĕлйун тенкĕлĕх) турттарса кайнă. Машинăсемпе завод оборудованийĕсене иртнĕ çулта 13,2 мĕлйун тенкĕлĕх, йе 1936 çулхинчен 8,1 мĕлйун тенкĕ ытларах турттарса кайнă тата ыт. те.

Промышленнăç таварĕсене турттарса кайасси 1937 çулта, 1936 çулхипе танлаштарсан, 97,3 мĕлйун тенкĕ ÿснĕ. ССР Сойузĕнче нефт кăларса, ăна усă курмала тăвасси калама çук пысăккăн ÿснĕ пулсан та, нефт продуктисене турттарса кайасси кăштах чакнă.

1936 çулта çав продуктăсене 160,8 мĕлйун тенкĕлĕх турттарса кайнă, 1937 çулта вĕсене турттарса кайасси 10,7 мĕлйун тенкĕлĕх чакнă. Чакнин сăлтавне çакă—ССР Сойузĕнче автомобилпе трактор хуçалăхĕ вăйлăн ÿссе пырать, ăна валььи нефтепродуктăсем пит нумай кирлĕ.

ССР Сойузĕ техникăпа економикă тĕлĕшĕнчен никама та пăханса тăмала мар пулса тăни йутçĕршывсенчен тĕрлĕ таварсем турттарса килессине чакарма май пачĕ. Халĕ епĕр чи вĕрçĕнĕ техникă оборудованисене, тĕрлĕрен çĕнĕ йапаласене тата хăшпĕр çитмен чĕр таварсене (каучук, джут, маниьски сÿс, кофе, какао та урăххисем те) çеç кÿрсе килетпĕр. 1937 çулта (1936 çулхипе танлаштарсан, кÿрсе килесси çакăн пек чакнă: машинăсем кÿрсе килесси тăрăх 132 мĕлйун тенкĕ таран, йе 32,9 процент чакнă, хура металсем тăрăх 13,1 мĕлйун тенкĕ таран, йе 13,3 процент чакнă, хими продуктисем тăрăх 9,5 мĕлйун тенкĕ, йе 39,7 процент чакнă тата ыт. те.

ССР Сойузĕпе суту-илÿ тăвас тĕлĕшпе 1937 çулта, 1936 çулти пекех, пĕрремĕш вырăнта Великобритани тăнă, иккĕмĕш—Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем. (ТАСС).

Ача йаçлисем

Çураки вăхăтĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи 60 колхозра ача йаçлисемпе ача плошчадкисем уçма палăртса хунă.

Гер. Иванов.

Халăх пултарулăхне кăтартни

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шемогофски алăстаçăсем (В.—Устÿгски р., Вологда облăçĕ) хурăн хуппи çине касса тунă çĕпĕ картинă.

(„Советская мысль" хаçатран).

Совет Сойузĕ тăрăх

■■ Винницă облăçĕнчи колхозсем (Украинă) сахăр кăшманĕ акма пуçланă. Кăшмана йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акаççĕ.

■■ „Парижская коммуна" линкора ССР Сойузĕнчи тинĕс-çар вăйĕсен стройне кĕртни 14 çул тултарчĕ. Уйав йачĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ П. А. Смирнов йулташ линкор çинчи личнăй состава салам йанă.

■■ Иртнĕ çулта Ленинградри предприйатисем рабочисем панă изобретенисемпе тата рационализацилĕ сĕнÿсемпе производствăра усă курнă пирки 93 мĕлйун та 280 пин тенкĕ перекетлесе хăварнă. Ленинградри предприйатисенче активлă изобретателсем 33 пин çын ытлă шутланаççĕ.

■■ Çураки вăхăтĕнче Украинă уйхирĕсенче кÿллен кирлĕ таварсене ĕçленĕ çĕрех турттарса пырса сутас тĕлĕшпе 6 пин лавка, 900 ытла ларйоксемпе киоскăсем тата 20 пин таран алвĕççĕн сутакансем ĕçлемеле. Çавăн пекех тата 330 буфет-столовăйсем, 2500 ытла куçса çÿрекен кухньăсем, урана тăхăнмалисене йусакан 300 мастерской тата тумтирсем йусакан 135 мастерской ĕçлеме пуçлаççĕ.

■◆ „Çурçĕр польусĕ" йатлă куçса çÿрекен станци пурлăхĕсемпе хатĕрĕсене Мускава илсе çитерне. Вĕсене вокзалран склада турттарса кайма çичĕ грузовик кирлĕ пулнă. Пăр çинчи лагер йапалисене Мускавра пурне те курăнмали вырăна кăларса лартаççĕ.

◆◆ СЕРГО, мартăн 20-мĕш. Ĕлĕк Кадийевкă шахтă поçолки пулнă вырăнта, халĕ Серго йатлă социалисăмлă хулара, хулари организацисен решенийĕсем тăрăх кăçал социалисăмлă индустрин командармĕ Серго Орджоникидзе памйатникне лартаççĕ. (ТАСС).

Малтанхи утăмсем

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче ĕçлекен рабочисен „Стрела" спорт обшчиствине организацилени нумаййах та пулмасть-ха. Унта 95 физкультурник пĕрлешнĕ.

„Стрела" обшчествă февраль уйăхĕнче йĕлтĕрçĕсен ăмăртуне иртерчĕ. Савăн пекех чукунçул строителствинче ĕçлекен рабочисен-йĕлтĕрçĕсен Калугăра пулса иртнĕ Пĕтĕм Сойузри ăмăртуне 4 çын кайнă. Вĕсем унта пурте пĕрремĕш вырăна тухнă.

И. Демйашкин

Лайăх çулйĕрсемшĕн

ЙЕТĔРНЕ. Улхаш Шăматри „Спутник колхозника" колхозри çулйĕр бригади (бригадирĕ М. Кузьмин) çулсемпе кĕперсене çурхи шыв ватасран сыхласа хăварас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлеме тытăнчĕ. Çак кунсенче бригадă Елĕкпе Йетĕрне хушшинчи аслă çул çине 85 кубла метр хăйăр турттарчĕ. Йал таврашĕнчи çырмасем урлă хывнă кĕперсене тĕрĕслесе тухса, начарланнă кĕперсене йусама кирлĕ таран строматериалсем турттарса хатĕрлерĕ. Шăмат колхозне кура Йуманайĕнчи „Большевик" колхозра та аслă çула йакатма хăйăр турттарма пуçларĕç.

С. Рйабиновский.

Хутла пĕлекен пулаççĕ

Йанвар уйăхĕнчен пуçласа Йетĕрне районĕнчи Йекĕмушкĕн йалĕнче хутла пĕлменнисен шкулĕ ĕçлет. Шкулта пурĕ 56 çын вĕренеççĕ, вăл шутран 50 хĕрарăм. Вĕсене Леонтйев комсомолец вĕрентет. Вăл шкула пыма пултарайман ачалă хĕрарăмсем патне килĕсене çÿрет.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун тĕлне пурте хутла пĕлекен пулма тăрăшаççĕ.

А. Илйин.

Атăл çинче

Мартăн 20-мĕшпе 23-мĕш хушшинче Атăл шывĕ 5 сантиметр хăпарнă.

Пулни-иртнисем

■■ Шупашкарти Чувашскайа урамра 51-мĕш №-лĕ çуртра пурăнакан Д. И. Такмаков хăйсен килĕнчи 15 çулхи С. А. работницăна тапăнса пусмăрланă. Кайран ăна хăваласа йанă. Милици управленийĕ ку ĕçе тĕрĕслесе пĕтерсе, Такмакова суда панă.

■■ Мартăн 13-мĕшĕнче Мăн Шетмĕ йалĕнчи (Трак р.) Анна Александровă, колхозри обшчежитинче кăмака хутнă чухне, хăйĕн 9 уйăхри ачине çунакан вут çине пăрахса пĕçертнĕ. Ачи çавăнтах вилнĕ. Александровăна арĕсленĕ.

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Пуçламĕшпе вăтам шкулта ĕçлекенсен Чăваш республикĕнчи комитечĕн Шупашкарти канмали çурчĕ

(Атăл лешйенчи пĕркунлăх канмали çурт)

1938 çулхи май, çентабĕр тата октабĕр уйăхĕсенче канма

12 кунлăх путовкăсем сутать.

Çемйелĕ çынсене валььи, зайавкă тăрăх, уйрăм пÿлĕмсем пур, (2, 3, 4 çынна валььи). 8 çула çитмен ачасене йышăнмаççĕ.

Зайавкăсене кăçалхи мартăн 25-мĕшчен çеç Сойузсен çуртне 1-мĕш пÿлĕм (Шупашкар) Канмали çурт дирекцине памала. Мартăн 25-мĕшĕ иртсен зайавкăсене йышăнмаççĕ.

Шупашкар хулинчи кимĕ хуçисене пурне те

Шупашкар хулинчи шыв тулнин сийенĕпе кĕрешекен комиççи пур организацисене тата уйрăм çынсене хăйсен

кимисене, байдаркисене, йаликсене—

1 тоннă таран тийемелисене регистрацилеме хушать.

Регистрацине Освод çуртĕнче, (Атăл хĕрринче) кăçалхи мартăн 25-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 5-мĕшчен туса пыраççĕ.

З а н ь а т и ирхине 10 сехетрен 4 сехетчен.

Хула комиççийĕ.

1938 çулта çуллахи сезонра Чебторгăн квас сутакан ларйокĕсенче ĕçлеме

Продавецсем кирлĕ

Чеборга кадрсен пуçлăхĕ патне пымала.

2—2

Чăвашсен Педагогикă Институчĕ харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен студентсене пĕлтерни

Килте, харпăрхăй тĕллĕн вĕренмели кĕнекесене (литературă) малала укçасăр йамаççĕ. Вĕренмели кĕнекесене Институт урлă илес текенсем, малтан çак адреспе 50 тенкĕ укçа куçармала: Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 82, Чăвашпединститут бухгалтерине.

Укçа куçараканăн хăйĕн адресне тĕплĕн кăтартмала, хушамат, йат, ашшĕ йачĕ—пĕтемпех кирлĕ тата шифр.

Дирекци.

2—2

Пур предприйатисене, учреждениcене, ертелсене, колхозсене пĕлсе тăма

ШУПАШКАРТИ

1-мĕш № типографи

пичетсем, штампсем, тĕрлĕрен бланксем тума

почтă урлă нимĕнле заказ та йышăнмасть.

Заказ панă чух малтан, заказ памалине тивĕçлĕ организацине кăтартса çирĕплеттермеле, вара заказ паракан организацин, предприйатин, колхозăн, учрежденин хăйĕн çынне йамала.

Дирекци.

2—2

Академи театрĕнче

Мартăн 24-мĕшĕнче

Вырăсла спектакль

Н. В. ГОГОЛЬ

РЕВИЗОР

(5 пайлă комеди)

Аслă режиççор Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.

Художник Й. Н. САПОЖНИКОВ.

Талон № 146.

Абонемент № 1, талон № 14.

АНОНС! П. Н. Осипов **АЙДАР**

Рахманов **ПРОФЕССОР ПОЛЕЖАЕВ**

лартма хатĕрленеççĕ.

Шупашкар хулинчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

Мартăн 27-мĕшĕнче Йалхуçалăх институтĕнче (Ленинградскайа урам, 19) Шупашкар хулинчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулать. Кун йĕркинче: „РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси тата вырăнсенчи пичет задачисем çинчен."

А. Воронков йулташ доклад тăвать.

ПСК(б)П Хула Комитечĕ

„Красная Чувашия"

„Чăваш Коммунĕ"

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 147. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.